чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

ШĂМАТ КУН
2014, нарăс /февраль/
15

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнчи "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

28-29 /26434-26435/ №№ Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

Уйăхлăх

# Асран тухмасть Афганистан

*Совет Çарĕн чаçĕсене Афганистанран илсе тухнăранпа паян 25 çул çитрĕ. Çак пулăма Раççейре кăна мар, Совет Союзĕн йышĕнче пулнă хăш-пĕр çĕршывра та анлă паллă тăваççĕ.*



Кăрлачăн 23-мĕшĕнче пуçланнă Тăван çĕр-шыв хÿтĕлевçин кунне халалласа ирттерекен Пĕтĕм Раççейри йăлана кĕнĕ массăллă оборона тата спорт уйăхлăхĕ вăхăтĕнче кашни хуларайонтах, çавăн пекех чылай коллективра вăрçă ветеранĕсемпе тĕл пулусем, тематика каçĕсем, чĕрĕк ĕмĕр каялла Афганистанри çапăçусенче пуç хунă ентешсене асăнса спорт ăмăртăвĕсем йĕркелеççĕ. Паллă кун ячĕпе Шупашкарти П.Хусанкай ячĕллĕ культура керменĕнче Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ, Çар комиссариачĕ тата общество организацийĕсем ирттернĕ мероприятие ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев хутшăнчĕ.

– Эпир 1979 çул вĕçĕнче кÿршĕ çĕр-шывра пуçланнă вăрçа нихăçан та манма пултараймастпăр. 80-мĕш çулсенче унта пирĕн республикăран çара кайнă 5692 интернационалист воин хутшăннă. Шел те, 300 ентеш хаяр çапăçусенче пуç хунă е Чăваш Ене инвалид пулса таврăннă. Афганистанра хăйĕн тивĕçне чыслăн пурнăçланă кашни ентеш паян та çитĕнекен ăрăва чăн-чăн ырă тĕслĕх кăтартать. Ахальтен мар ĕнтĕ çамрăксене патриот воспитанийĕ парас, яшсене Раççей çарне хатĕрлес тĕлĕшпе 2012-2013 çулсенче ирттернĕ Пĕтĕм Раççейри конкурсра пирĕн республика пĕрремĕш вырăн йышăннă, Раççей оборона министерствин вымпелне тивĕçнĕ. Çак çитĕнÿре сирĕн тÿпе питĕ пысăк. Шанатăп: эсир малашне те çитĕнекен ăрăва чăн-чăн ырă тĕслĕх кăтартатăр, – терĕ Михаил Васильевич.

Интернационалист воинсен общество организацийĕн представителĕсемпе пулас салтаксем Çĕнтерÿ паркĕнче Афганистан вăрçинче пуç хунă ентешсене халалласа вунă çул каялла уçнă палăк умне чечек кăшăлĕ хучĕç. Пурте пĕр минут шăп тăчĕç, анлă лапамра хурлăхлă кĕвĕ янăрарĕ...

Культура керменĕнче иртнĕ каçра çавăн пекех ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрĕ А.Самойлова, республикăн çар комиссарĕ А.Мокрушин, Афганистан вăрçин ветеранĕсен Раççейри союзĕн Чăваш Республикинчи организацийĕн председателĕ И.Кашаев, Афганистан вăрçин инваличĕсен Чăваш Енри организацийĕн ертÿçи Г.Матвеев тата Пĕтĕм Раççейри «Доблесть» çар пĕрлĕхĕн Чăваш Енри правленийĕн председателĕ В.Яковлев сăмах каларĕç.

Уяв каçĕнче 50 ытла «афганец» Раççей Федерацийĕн Правительствин медалĕсене тата Пĕтĕм Раççейри организацисен тĕрлĕ наградине тивĕçрĕ. Уяв Шупашкарти искусство ăстисен пысăк концерчĕпе вĕçленчĕ.

Петр СИДОРОВ

## Наркотĕрĕслев ĕçне пĕтĕмлетнĕ

*Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ĕнер Федерацин наркотĕрĕслев службин Атăлçи округĕнчи территори органĕсен ертÿçисен оперативлă канашлăвне хутшăнчĕ. Унта çавăн пекех РФ Генеральнăй прокурорĕн çумне Сергей Зайцева, Раççей Президенчĕн округри полномочиллĕ представителĕн аппаратне федерацин Чăваш Енри тĕп инспекторне Геннадий Федорова, ГАК аппарачĕн ертÿçин çумне – округри управлени пуçлăхне полици генерал-майорне Сергей Васильева чĕннĕ.*

Канашлура сăмах илнĕ май республика Пуçлăхĕ наркотиксен саккунсăр çаврăнăшĕпе кĕрешесси влаç органĕсен тĕп тивĕçĕсенчен пĕри пулнине палăртнă. Анчах çак инкеке право хуралĕн органĕсем кăна парăнтараймĕç, çавăнпа обществăра наркотиксем тĕлĕшпе тÿсĕмсĕрлĕх лару-тăрăвне туса хумалла. Михаил Игнатьев çавăн пекех Чăваш Енре çамрăксен хушшинче сывă пурнăç йĕрки, физкультурăпа спорт занятийĕсем йăлана кĕнине палăртнă. Ачасемпе çамрăксен спорт юхăмне аталантарни табак туртакансен, ĕçкĕпе иртĕхекенсен шутне чакарма май панă.

ФСКНăн территори органĕсен 2013 çулхи ĕç-хĕлне тĕп докладра асăннă службăн округри органĕсен пуçлăхĕсен канашĕн председателĕ – ФСКНăн Чул хула облаçĕнчи управленийĕн пуçлăхĕ Юрий Боровский пĕтĕмлетнĕ.

Н.ПОТАПОВ

## Нарăсăн 1-мĕшĕнчен – малтанхи хакпа

***Хисеплĕ вулакансем! "Хыпар" Издательство çурчĕн кăларăмĕсене 2014 çулăн II çурринчен илсе тăмашкăн нарăсăн 1-мĕшĕнчен тытăнса пуш уйăхĕн 31-мĕшĕччен малтанхи хаксемпе çырăнтараççĕ***

| КĂЛАРĂМСЕМ | ИНДЕКС | ÇЫРĂНТАРУ ХАКĔСЕМ | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| | | Почта уйрăмĕсенче | «Чăваш пичет» киоскĕсенче | «Советская Чувашия» киоскĕсенче | Редакцире |
| Хыпар | 54800 | 460-86 | 279 | 279 | 144 |
| Хыпар-шăмат кун | 78353 | 218-22 | 141 | 141 | 90 |
| Çамрăксен хаçачĕ | 54804 | 272-22 | 231 | 231 | 144 |
| Чăваш хĕрарăмĕ | 11515 | 243-18 | 213 | 213 | 141 |
| Сывлăх | 11524 | 130-98 | 111 | 111 | 81 |
| Кил-çурт, хушма хуçалăх | 54806 | 122-70 | 111 | 111 | 81 |
| Хресчен сасси | 54838 | 226-62 | 162 | 162 | 114 |
| Хресчен сасси–кил | 43887 | 102-90 | 84 | 84 | 61-20 |
| Тăван Атăл | 11529 | 251-76 | 216 | 216 | 168 |
| Капкăн | 24608 | 122-10 | 105 | 105 | 87 |
| ЛИК (Литература. Искусство. Культура) | 83429 | 127-92 | 120 | 120 | 100 |
| Вести Чувашии | 54807 | 220-08 | 186 | 186 | 144 |
| Собрание законодательства Чувашской Республики | 54847 | 695-88 | 660 | 660 | 570 |
| Тантăш | 54802 | 192-18 | 132 | 132 | 90 |
| Самант | 73208 | 155-64 | 156 | 156 | 120 |
| Тетте | 73771 | 119-58 | 111 | 111 | 90 |

# Пуян та мухтавлă çул



ЧР ПА пресс-службин сăнӳкерчĕкĕ

***Ĕнер Муркаш енри ĕçченсемпе ветерансен пысăк ушкăнĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче пуçтарăнчĕ. Района туса хума йышăннăранпа 70 çул çитнине паллă турĕ.***

Район тата унăн администрацийĕн пуçлăхĕсем Игорь Николаевпа Ростислав Тимофеев Муркашсем 70 çулта чыслăн та мăнаçлăн утса тухнă çулпа паллаштарчĕç. Муркаш ене Чăваш АССР Аслă Канашĕн Президиумĕн 1944 çулхи нарăсăн 10-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн никĕсленĕ.

Уява пухăннисене республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев саламларĕ.

– Районăн çак тапхăрне пĕтĕмĕшле лайăх хак паратăп, – терĕ вăл. – Çапах та экономикăпа социаллă пурнăçра ӳсĕм те, каялла чакни те, лайăххи те, япăххи те пулнă. Муркаш тăрăхĕ республикăшăн яланах вăйлă, пысăк пĕлтерĕшлĕ шутланнă. Хăйĕн тĕллевĕсене пурнăçлассишĕн çирĕп тăнă. Хальхи вăхăтра та çак хаклава тивĕçлĕ. Ӳлĕм те çаплах пулĕ. Эсир ăçта вăй хурсан та хăвăр тивĕçĕре ăнăçлă пурнăçлатăр. Район историйĕ – çынсен пуянлăхĕ. Унсăр малашлăх çук. Паянхи савăнăçлă ларăва илемлĕ те илĕртӳллĕ культура керменĕнче иртерни те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Культура çулĕнче пирĕн историпе, пĕтĕм тĕнчешĕн хаклă пахалăхсемпе, çемьепе çыхăннă ыйтусене ытларах сӳтсе явмалла. Кашни патшалăхра сарăлнă глобализаци халăх тымарĕнчен килекен пахалăхсене кăштах «шĕветет» пулин те çынсем Тăван çĕршыва, республикăна, района юратни – тĕп вырăнта.

Михаил Игнатьев район пурнăçне лайăхлатас ĕçе ветерансем хăй вăхăтĕнче пысăк тӳпе хывнине, чылайăшĕ республикăн социаллă пурнăçĕпе экономикинче те çитĕнӳ тунине палăртрĕ. Хăшĕ-пĕри хăйĕн пултарулăхĕпе Раççее çеç мар, тĕнчене те тĕлĕнтернĕ. Пуçарулăх кăтартакан çамрăксене, уйрăмах çĕнĕ предприятисем уçса производство йĕркелекенсене, тĕрлĕ продукци туса кăларакансене тата пулăшу ĕçĕ тăвакансене ырă сăмахсемпе хавхалантарчĕ. Патшалăх енчен вĕсене пулăшма шантарчĕ.

– Пурăнмалли çурт çуллен ытларах тăватăр. Вак суту-илӳ çаврăнăшĕ вăй илсех пырать. Маларахри çулсемпе танлаштарсан автомашина нумайрах туянатăр, – терĕ М.Игнатьев. – Пĕлтĕр ача çуралассии республикăн вăтам кăтартăвĕнчен лайăхланнипе, çав вăхăтрах çын вилесси ытлараххипе палăрнă. Ку кăтартăва кăсал аванлатасса шанатăп.

Республика Пуçлăхĕ район влаçĕнчен çынсен пурнăçне лайăхлатассишĕн, уйрăммăн илсен ĕç вырăнĕ ытларах йĕркелессишĕн, шалăва ӳстерессишĕн çине тăрса вăй хума ыйтрĕ. Пурне те сывлăх, телей, ăнăçу тума ырă сунчĕ. Район экономикипе социаллă пурнăçне пысăк тӳпе хывнăшăн пĕр ушкăна патшалăх наградисем пачĕ.

■ **Юрий МИХАЙЛОВ**

*Сесси*

# УЭК ыйтăвĕ, инвалидсене ĕçе вырнаçтарасси...

***Хĕллехи каникул хыççăн чăваш парламентарийĕсем çĕнĕ вăй-хăватпа ĕçе тытăнчĕç. Ĕнер вĕсем Патшалăх Канашĕн черетлĕ вун тăххăрмĕш сессийĕн кун йĕркине кĕртнĕ 12 ыйтăва тишкерчĕç.***

Саккун проекчĕсенчен ытларахăшĕ субъектăн халĕ ĕçлекен саккунĕсене федерацинниипе шайлаштарассипе çыхăннă. Чăваш Республикин муниципалитетăн нормăпа право акчĕсен регистрне йĕркелесси тата вĕсене тытса пырассин саккунне мĕншĕн тӳрлетӳсемпе хушăмсем кĕртме тивнине Чăваш Ен юстици министрĕ Надежда Прокопьева ăнлантарса пачĕ: «Федерацин «Патшалăх влаçĕн ĕç тăвакан тата саккун кăларакан органĕсен ĕç-хĕлне йĕркелессин пĕтĕмĕшле принципĕсем çинчен» саккунĕ улшăннă май субъектсенчи муниципалитет регистрĕн нормăпа право акчĕсене хатĕрлемелли тата тытса пымалли йĕркене çĕнетме тивет. Унччен эпир çак саккуна хут çине çырса вăй кĕртнĕ тĕк, халĕ ăна электрон мелĕпе кăна çирĕплетмелле. Çакă патшалăхăн информаци уçăлăхне уçăмлатассипе, халăх хăйне кăсăклантаракан ыйтусен хуравне тӳрех тупассине лайăхлатассипе çыхăннă. Чылай чухне вăл муниципалитета çитекен правăн нумай акчĕсен хушшинче «çĕтсе» кайнă. Кăçалхи нарăс уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне регистра 40 пине яхăн правăпа норма акчĕ вырнаçтарнă. Кашни çулах унта 12 пин нормăпа право акчĕ кĕртеççĕ. Кăçалхи кăрлачра кăна 2 пин те 268 муниципалитет актне «вырăн панă»...

Надежда Викторовна ăнлантарнă тăрăх – çак тивĕçе малашне муниципалитет влаç органĕ хăйĕн вăйĕпе туса пырĕ. Çакă бюджет укçи-тенкине тăкаклассине палăрмаллах чакарма май парать. Саккун проектне профильлĕ комитетсенче тĕплĕ сӳтсе явнăран депутатсен докладчик патне ыйтусем пулмарĕç, саккун проектне харăсах икĕ вулавпа йышăнчĕç.

Сессин кун йĕркинчи иккĕмĕш ыйту ку е вăл производствăра вăй хума пултаракан сусăрсем валли ĕç вырăнĕ квотăламалли саккуна улшăнусем кĕртессипе çыхăннă. Патшалăх Канашĕн Социаллă политика тата наци ыйтăвĕсем енĕпе ĕçлекен комитет ку тĕлĕшпе ятарлă тĕпчев ирттернĕ, унăн пĕтĕмлетĕвĕпе саккун проекчĕ хатĕрленĕ. «Пĕлтĕр Патшалăх Канашне, пирĕн комитета инвалидсене ĕçе вырнаçтарас пирки çыру нумай килчĕ. Сăмахран, «РусГидро» ертӳçисем, çавăн пекех республикăри ытти предприяти инвалидсем валли ĕç вырăнĕ квотăланă чухне сывлăхшăн сиенлĕ /шавлă, вибрациллĕ, газлă.../ ĕç вырăнĕ уйăрма кирлĕ марри çинчен пĕлтерчĕç», – терĕ комитет председателĕ Петр Краснов. Вăл асăннă квотăна пирĕн республикăра 88-90% пурнăçланине пĕлтерчĕ: «Ку Раççейри чи лайăх кăтартусен шутĕнче». Виçĕм çул сусăр çынсем ĕçе вырнаçтарма ыйтса çырнин 60 процентне тивĕçтернĕ. Пĕлтĕр ку цифра 70 процентпа танлашнă. Малашне хальхи пек 40-30% аякра ан юлчăр тесе депутатсем икĕ вулавпа асăннă саккуна улшăнусем кĕртме йышăнчĕç.

Универсал электрон карттине илмелли вăхăта тепĕр çултăлăкла тăсассипе пуçарнă калаçу тĕрлĕ шухăшлăх çуратрĕ. Пĕрисем çакна хирĕç /«ял çыннине вăл ним тума та кирлĕ мар. Ăна хатĕрлени бюджет укçине ахалех тăкаклани»/, теприсем çĕнĕ технологие алла илнисем майлă: «меллĕ, хăвăрт». Ĕнерхи кун тĕлне пирĕн республикăра 5 пин ытла çын асăннă карттăна илнĕ, 15 пинĕшĕ заявлени çырнă. Тавлашура чăнлăх çуралать тенĕн – хальхинче те тупăнчĕ вăл. ЧР информполитикин министрĕ Валентина Андреева, Андрей Кулагин, Николай Малов, Вячеслав Александров депутатсен сăмахĕ иккĕленекенсен шухăшне сĕвĕрĕлтерчĕ ахăртнех: 42 депутатран 38-шĕ иккĕмĕш вулавпа уншăн сасăларĕç.

Депутатсем çавăн пекех республикăн ытти саккунне улшăнусем кĕртсе федерацинниипе шайлаштарчĕç, Чăваш Республикин Шалти ĕçсен министерствин, Патшалăх Канашĕн Аппарачĕн отчечĕсене итлерĕç, Сĕнтĕрвăрри район администрацийĕн пуçлăхне суйлама конкурс комиссийĕн йышне çирĕплетрĕç.

■ **Юрий СТЕПАНОВ**

*Тĕрĕслев*

# Каччăсене çара ярасшăн мар-и?

***Вырăнти прокуратура Сĕнтĕрвăрри районĕнчи аслă тата пуçламăш професси вĕрентĕвĕн учрежденийĕсем çар призывĕ çинчен калакан саккуна мĕнле пурнăçланине тĕрĕсленĕ. Шел те, çитменлĕхсем пур.***

Федерацин «Çар тивĕçĕ тата çар служби çинчен» саккунĕпе килĕшӳллĕн граждансем çар тивĕçне пурнăçлассишĕн организацисемпе вĕсен ертӳçисем те яваплă. Хăш харпăрлăхра, мĕнле йĕркелӳпе право форми – пĕлтерĕшлĕ мар.

Тивĕçлĕ положенире çар комиссариачĕсен çар учечĕн документчĕсене кирлĕ пек тытса тата çĕнетсе пымаллине палăртнă. Организацисенче ку енĕпе ĕçлекенсен çар учетне илмелли граждансемпе çыхăннă кăтартусене çар комиссариатне е вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене 2 эрнере памалла. «Поволжский ГТУ» вĕрентӳ учрежденийĕн Сĕнтĕрвăрринчи филиалĕнче, 11-мĕш тата 28-мĕш профучилищĕсенче çапла туман – вĕренме йышăннă /е вĕренĕве вĕçленĕ/ çамрăксем пирки кăтартусене комиссариата паман.

Саккуна пăсни куç кĕрет, çавна май прокуратура асăннă вĕренӳ учрежденийĕсен ертӳçисем пирки представленисем çырнă, вĕсен должноçри çыннисем тĕлĕшпе административлă правăна пăсни çинчен калакан ĕçсем пуçарнă.

Прокуратура призыв комиссийĕ çамрăксене çар службине илессине каяраха хăварнă тĕслĕхсене те кăсăкланнă. Патшалăх аккредитацийĕ çук специальноçсене вĕренекен граждансене призывран хăтарнине тăрă шыв çине кăларнă.

Çӳлерех асăннă саккунпа килĕшӳллĕн призыва каяраха хăвармалли çăмăллăхпа патшалăх аккредитацийĕллĕ специальноçсемпе куçăн майпа вĕренекенсем кăна усă курма пултараççĕ. Хушма ытти услови те пур. «Поволжский ГТУ» вĕрентӳ учрежденийĕн Сĕнтĕрвăрринчи филиалĕнче пĕлӳ илекенсен унашкал право пулман, анчах призыв комиссийĕн йышăнăвĕпе вĕсене салтак тумĕ тăхăнассинчен хăтарнă. Куншăн районăн призыв комиссийĕн председателĕн çумĕн – Шупашкар тата Сĕнтĕрвăрри районĕсен çар комиссариачĕн пай пуçлăхĕн ячĕпе представлени тăратнă.

■ **А.КАЮКОВ,**
**Сĕнтĕрвăрри районĕн прокурорĕн аслă пулăшуçи**

# «Содружество» хаклатнă

ЧР Министрсен Кабинечĕ общество транспорчĕпе /хулара, хула çумĕнче, хуласен хушшинче çӳрекеннипе, çавăн пекех хулари троллейбуспа/ пассажирсене тата багажа илсе çӳренĕшĕн тӳлеттермелли çĕнĕ тарифа транспорт предприятийĕсем правительствăна ыйтупа тухнă хыççăн хăйсен сĕнĕвне экономика тĕлĕшĕнчен пĕтĕмлетсен çеç пăхса тухса тепĕр хут çирĕплетет.

– Кăçал пассажирсем илсе çӳрекен предприятисем тарифсене пысăклатма ыйтман. Çавăнпа вĕсене çывăх вăхăтра улшăну кĕртме палăртмастпăр, – пĕлтерчĕ редакцие республикăн конкуренци политикин тата тарифсем енĕпе ĕçлекен патшалăх служби ертӳçи Альбина Егорова.

Республикăри пассажирсене пуйăспа илсе çӳрекен «Содружество» АУО билета хаклатнă. ЧР Министрсен Кабинечĕн 2014 çулхи кăрлачăн 22-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн хула çумĕнчи 10 çухрăма пĕр çынна ларса каймалли хак 24 тенкĕпе танлашать. Пĕр пассажиршăн 10 километр хăй хаклăхĕ вара – 36,5 тенкĕ. «Содружество» çул укçине ӳстерме йышăннă пулин те тăкака саплаштараймасть. Республика хыснинчен укçа уйăрса пассажирсене турттаракан предприятисен тăкакне çуллен саплаштараççĕ.

«Тарифа пысăклатма йышăниччен чи малтан кирлĕ маршрутсене сыхласа хăварасси çинчен шухăшлатпăр», – пĕтĕмлетрĕ юлашкинчен Альбина Егоровна.

■ **С.СЕРЕГИН**

*Канашлу*

# Шупашкар урамĕсем анлăланĕç

***Пурнăç хăвăрт улшăнать. Шурă Шупашкарăмăр, акă, юлашки 30-40 çултипе танлаштарсан, мĕн таран сарăлчĕ. Нумай хутлă çуртсем шăкăрин çĕкленеççĕ, çĕнĕ микрорайонсем усăлаççĕ. Чăвашсен тĕп хулин аталанăвĕ пурне те хавхалантарать. Çав вăхăтрах çийĕнчех татса памалли ыйтусен «çăмхи» те хулăнлансах пырать. Хăй вăхăтĕнче, уйрăм çынсен çăмăл машинисен шучĕ сахал чухне, хальхи пек «пăкă» çине «пăкă» пулса хаклă вăхăта çухатман.***



Статистика пĕлтернĕ тăрăх – Шупашкарта кăна кашни çулах 20-22 пин çăмăл автомашина туянаççĕ. Ялсенчен ĕçпе килекен çынсен техникине шутласассăн тахçанхи юрăри пек – «Шупашкарăн анлă урамĕсем» те самантрах хĕсĕнсе лараççĕ. Апла тăк – йывăр лару-тăруран тухмалли çул-йĕре тупмаллах.

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ертсе пынипе иртнĕ канашлура республика правительствин членĕсемпе тĕп хуламăр ертÿлĕхĕ Шупашкар хулинчи транспорт инфратытăмĕн аталанăвĕн ыйтăвĕсене тишкерчĕç. Хулан тĕп планĕпе магистральлĕ чылай урампа тĕп çула реконструкцилесе сарма е çĕнĕрен тума йышăннă. Мĕншĕн тесен вĕсен паянхи тăрăмĕ никама та тивĕçтермест. Хулан тĕп архитекторĕ Александр Шевлягин иртнĕ çулхи нарăс уйăхĕнче конкурс ирттерсе Санкт-Петербургри урбанистика институчĕпе автотранспорт инфратытăмне аталантармалли тĕп план хатĕрлеме контракт тунине пĕлтерчĕ, вăл мĕнле улшăнусем илсе килессипе паллаштарчĕ. Шупашкар хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов, ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ - транспорт тата çул-йĕр хуçалăхĕн министрĕ Михаил Янковский, «Чăвашгражданпроект» проект институчĕ» АУО тĕп архитекторĕ Радий Рахимов, Шупашкар хулин пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн директорĕ Анатолий Павлов паян çĕнĕрен тăвакан тата реконструкцилекен çулсен хальхи объекчĕсем çинчен тĕплĕ каласа кăтартрĕç. Вĕсем: хула çум автовокзал патĕнчи лапамран пуçласа 9-мĕш пилĕк çуллăх проспекчĕнчи çаврăм унки таран çула /сăмах май, çак çулăн «МТВ-Центр» чарăнăвĕн тĕлĕнче çуран çÿрекенсем валли çĕр айĕнчи каçă тăваççĕ ĕнтĕ/, База тăкăрлăкĕнчи чукун çул урлă каçмалли разъезда, Воробьев композиторсен урамне /Президент бульварĕнчен Ярославль урамĕ таран/, хулари çулсем хĕресленнĕ 5 вырăна анлăлатасси, Айхи проспекчĕпе Фучик урамĕ пĕрлешнĕ çĕрте /Сăкăт кĕперĕ тĕлĕнче/ икĕ хутлă çул развязкине тăвасси.

Кусем – тĕпре шутланаканнисем. Кĕçех Çурçĕр-хĕвел анăç, Кăнтăр-хĕвел анăç тата Çĕнĕ кăнтăр микрорайонĕсене тÿрех çыхăнтаракан виççĕмĕш транспорт çурмаункин проектпа смета документацийĕ экспертиза витĕр тухмалла. Ун чухне çул-йĕр строительствин калăпăшĕ татах ÿсмелле. 2015-2016 çулсенче Мускав кĕперне юсаса анлăлатĕç. Çак ĕçсене пурнăçлама республика тата хула бюджечĕсенче çителĕклех укçа-тенкĕ /сăмах млрд суммăсем пирки пырать/ хывса хăварнă. Мускав кĕперне вара федераци шучĕпе çĕнетĕç.

Кăçалхи тĕп ĕçсенчен пĕри – Ю.Фучик урамĕпе Г.Айхи проспекчĕ хĕресленнĕ вырăнти икĕ хутлă çул развязкине Ю.Фучикпа Б.Хмельницкий урамĕсем хĕресленнĕ вырăнти путепровода, транспортăн виççĕмĕш çурма ункине /Университет урамĕнчен пуçласа 9-мĕш пилĕк çуллăх проспекчĕ/ таран туса пĕтерсе хута ярасси. Çавăн пекех Гладков урамĕнчи çул-йĕре тĕпрен юсĕç, Мускав проспектне Мускав кĕперĕнчен Афанасьев урамĕ таран анлăлатĕç.

Канашлу иртичченхи кун тĕлне 2,5 млрд тенкĕлĕх ĕç тума проектпа смета документацийĕ хатĕрленĕ. Иван Яковлев проспекчĕнче хĕрÿ ĕç пырать те ĕнтĕ. М.Игнатьев хăш-пĕр çĕрте сиксе тухнă ура хуракан чăрмавсене /çул-йĕр иртекен тĕлти кивĕ, аварилĕ çуртсенче пурăнакансене çĕнĕ хваттерсемпе тивĕçтересси т.ыт.те/ хальтерех сирсе пыма сĕнчĕ, палăртнине пурнăçлама укçа-тенкĕ шеллеме кирлĕ маррине асăрхаттарчĕ. Михаил Васильевич çавăн пекех палăртнине пурнăçлама бюджет тата кредит укçи-тенкипе кăна мар, хушма укçа-тенкĕ тупма облигацисем кăларма хушрĕ. Пĕтĕм ĕç-хĕл 2014-2019 çулсенчи тапхăрта вĕçленмелле.

■ **Юрий СТЕПАНОВ**

*Çĕр*

# Штраф пысăкланать

***Нарăсăн 15-мĕшĕнчен, паянтан, ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрпе чылай вăхăт усă курманшăн административлă яваплăха ÿстересси çинчен калакан федераци саккунĕ вăя кĕрет. Çĕр лаптăкĕ уйăрассипе, унпа усă курассипе, ăна харпăрлăха илессипе çыхăннă ыйтусем Раççей халăхĕшĕн яланах пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнă. Ахальтен мар ĕнтĕ юлашки çулсенче вĕсене тĕрлĕ шайра сÿтсе яваççĕ. Шел те, нумай вырăнта ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕр пушă выртать, удобрени хывманран пулăхне çухатать.***

Раççей Президенчĕ Владимир Путин çĕр-шыври йывăр лару-тăрăва тишкерсе «Раççей Федерацийĕн Административлă право йĕркине пăсни çинчен калакан кодексне улшăнусем кĕртесси çинчен» саккуна алă пусса çирĕплетнĕ. Ăна федерацин «Ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсен çаврăнăшĕ çинчен» саккунĕнче палăртнă вăхăт хушшинче ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕре ĕçе кĕртменшĕн административлă яваплăха ÿстерес тĕллевпе йышăннă.

Лаптăк харпăрлăхçисемшĕн, ăна тара илнисемшĕн, çĕр хуçисемшĕн, унпа усă куракансемшĕн – ăна тĕллевлĕн ĕçе кĕртме тивĕçлисемшĕн – штраф пысăкланать. Унăн виçине саккунра цифрăпа палăртман, çавнашкал çĕрсен кадастр хакĕнчен процент кăлараççĕ.

Штраф виçи уйрăм çыншăн çĕр лаптăкĕн кадастр хакĕн 0,3-0,5 процентчĕ чухлĕ пулĕ. Должноçри çыншăн çав виçене – 0,5-1,5, юридици сăпачĕшĕн 2-10 процент çирĕплетнĕ.

Мĕн пур категоришĕн чи пысăк штраф виçине те палăртнă. Вăл 500 пин тенкĕрен ытла пулмĕ. Республикăра ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕр лаптăкĕн кадастр хакĕ вăтамран кашни гектар пуçне 36,3 пин тенкĕ тăрать.

Саккуна улшăну кĕртнĕ хыççăн ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрпе тухăçлăрах усă курма пуçласса, ăна пусă çаврăнăшне кĕртессишĕн ытларах вăй хурасса шанатпăр. «Ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕр çаврăнăшĕ çинчен» саккунпа килĕшÿллĕн лаптăкна виçĕ çул тата ытларах ял хуçалăх производствинче е унпа çыхăннă ĕç-хĕлре усă курман харпăрлăхçăран туртса илме пултараççĕ. Лаптăкпа усă курманнине ĕнентерекен палăсене Раççей Правительстви çирĕплетнĕ. Тĕрĕслевçĕсем виçĕ çула тата çĕрпе ытларах усă курман вăхăта лаптăкăн харпăрлăх правине панă кунран пуçласа шутлаççĕ.

Республикăра çĕр пуянлăхĕпе тухăçлăрах усă курма тĕллев лартнă. Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ЧР Патшалăх Канашне янă Çырура харпăрлăхри çĕрĕн пĕр пайне нумай çул пушă вырттарнине палăртрĕ. Çак ыйту федерацин ытти субъекчĕшĕн те çивĕч. «Çĕр хăйне пăхнине юратать», – терĕ Михаил Васильевич. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене виçĕ çулта ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕр пайĕсене харпăрлăх правине парассипе çыхăннă ĕçсене вĕçлеме хушрĕ.

Çум курăк ашкăрнă çĕрсемпе усă курма пуçласа хыснана укçа ытларах хывăпăр, ăна социаллă ыйтусене татса пама ярăпăр.

■ **Наталья ТИМОФЕЕВА,**
**ЧР пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен министрĕн çумĕ**

# Шыв-шура чикĕлеççĕ

«Федераци шыв-шура пăхса тăрас тĕлĕшпе республикăна шаннă хăш-пĕр тивĕçе пурнăçлама пире кăçал 7296 пин тенкĕ уйăрĕ, – пĕлтерчĕ редакцие ЧР çут çанталăк ресурсĕсен министрĕ Иван Исаев. – Çак ыйтăва Раççей Шыв ресурсĕсен агентствипе килĕштертĕмĕр».

Ку укçана шыв-шур чиккине, уйрăммăн илсен юхан шывсен хÿтĕлев тăрăхне /вĕсем 443 çухрăма тăсăлаççĕ/ хут çине ÿкерме, шыв-шур çинчен 198 пĕлтерÿ хăми вырнаçтарма ярĕç.

Çулталăк вĕçлениччен Энĕш, Урпаш, Хурашаш, Хирлеп, Эль, Хум, Вăрăм, Кĕçĕн Çавал юхан шывĕсен юпписене, ытти шыв-шура чикĕлесшĕн, пурне те хут çине ÿкересшĕн.

**С.СЕРЕГИН.**

*Пресс-конференци*

# Патшалăх пулăшăвĕ: хăвăртрах, пахарах

***Раççей Президенчĕн указĕпе килĕшÿллĕн 2015 çул тĕлне граждансен 90% хăйсем пурăнакан вырăнтах патшалăх пулăшăвĕсене "пĕр чÿрече" йĕркипе илмешкĕн май пулмалла, çав шутра, паллах, нумай функциллĕ центрсенче /НФЦ/ те. Çак хушăва пурнăçлас тĕллевпе пирĕн республикăра мĕнле ĕçсем туни пирки ЧР Экономика аталанăвĕн, промышленноç тата суту-илÿ министерствинче йĕркеленĕ пресс-конференцире каласа кăтартрĕç.***

"2015 çул тĕлне çынсем пурте тенĕ пекех хăйсем пурăнакан вырăнтах НФЦра патшалăх пулăшăвĕсене хăтлă условисенче хăвăрт та пахалăхлăн илме пултараççĕ. Президент указĕпе килĕшÿллĕн этемĕн черетре 15 минутран ытла ирттермелле мар ", – мероприятие усăнă май пĕлтерчĕ министр çумĕ Инна Антонова. Вăл каланă тăрăх – Чăваш Республикинче ку ĕçе тапхăрăн-тапхăрăн йĕркелеме, патшалăх тата муниципалитет пулăшăвĕсене 28 НФЦ /267 чÿрече/, çавăн пекех тĕслĕх библиотекăсене усăнă 232 чÿрече никĕсĕ çинче кÿме палăртнă. Чăваш Енре пĕрремĕш НФЦна 2010 çулхи çĕртме уйăхĕнче усăнă. Паянхи кун тĕлне çакнашкал 26 центр /пĕтĕмпе 94 чÿрече/ ĕçлет, вĕсенче 2013 çул пуçланнăранпа "пĕр чÿрече" йĕркипе 188,8 пин пулăшу кÿнĕ. Пĕлтĕрхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса çак мелпе 120 тĕслĕх библиотека никĕсĕ çинче усă курма пуçланă. Вĕсенче пĕтĕмпе 1548 консультаци, муниципалитетăн 163 тата патшалăх 1 пулăшăвне кÿнĕ. Кăçал тата тепĕр 112 тĕслĕх библиотекăра çакнашкал чÿречесем усăнă. Çапла вара тĕслĕх вулавăшсенче хальхи вăхăтра патшалăх тата муниципалитет пулăшăвĕсене памалли 232 чÿрече ĕçлет.

НФЦсен тĕп тĕллевĕ – влаçăн пĕтĕм шайри органĕсен тата муниципалитет пулăшăвĕсене май килнĕ таран пĕр вырăнта кÿресси. Çакнашкал центрсене йĕркелес шухăш ахальтен çуралман. Çынсене кирлĕ инстанцисем тĕрлĕ çĕрте вырнаçнă, вĕсен ĕç вăхăчĕ те пĕр пек мар, вăл е ку чиновник вырăнта пулмасан та пултарать. Нумайăшĕн хĕсĕк коридорсенче ирĕксĕрех темиçе сехет кĕтме тивет. НФЦсем çак мелсĕрлĕхсене май килнĕ таран чакарма тивĕç. Кун пек организацисенче пĕтĕм "йышăну пÿлĕмне" пĕр çĕре пухнă, вĕсен ĕçне пĕр графикпа йĕркеленĕ. Пулăшу ĕçĕсене тÿлевсĕрех кÿреççĕ, клиентсем саккунпа палăртнă пошлинăсене çеç тÿлеççĕ. Граждансем валли кĕтмелли мелле вырăнсем пур, унсăр пуçне Интернета тата Патшалăх пулăшăвĕсен пĕрлехи порталне кĕме майсем туса панă. Ачасем валли те кĕтес уйăрнă: пĕчĕкскерсем ашшĕ-амăшĕ документсемпе аппаланнă хушăра вăхăтне кăсăклă ирттерме пултараççĕ.

Нумай функциллĕ центрсенче паян 90 ытла пулăшу ĕçне кÿреççĕ, çав шутран 18-шĕ – федераци влаç органĕсен, 40-шĕ – республикăн, ыттисем – муниципалитет шайĕнчисем: тĕрлĕ справка, свидетельство, сертификат, лицензи илесси т.ыт.те. Районсенчи НФЦсем муниципалитет пулăшăвĕсен 70% тивĕçтереççĕ. Инна Антонова палăртнă тăрăх – паянхи кун республикăри халăхăн 55% хăйсем пурăнакан вырăнтах патшалăх пулăшăвне "пĕр чÿрече" йĕркипе илеççĕ. 2014 çул вĕçленнĕ тĕле ку кăтарту 70% çитмелле, 2015 çулта – 90%. Министр çумĕ Шупашкар хулин Калинин тата Мускав районĕсенче 2 НФЦ усма йышăннине те пĕлтерчĕ. Вĕсенчен пĕрне кăçалах хута ярасшăн. Меллĕ тепĕр самант – республикăри пĕтĕм НФЦра документсене "универсал специалистсем" йышăнни, çавна май çынсен ятарлă чÿрече патне лекес тесе черет тăма тивмест. Çак специалистсем ăсталăхне ÿстерес тĕллевпе влаç органĕсен представителĕсем йĕркелекен вĕренÿсене хутшăнаççĕ.

ЧР Министрсен Кабинечĕн Постановленийĕпе килĕшÿллĕн республикăра уполномоченнăй орган – ЧР Экономика аталанăвĕн, промышленноç тата суту-илÿ министерствин "Патшалăх тата муниципалитет пулăшăвĕсене кÿрекен нумай функциллĕ центр" АУ туса хунă. Вăл патшалăх пулăшăвĕсене "пĕр чÿрече" йĕркипе кÿрес тĕллевпе федераци тата республика влаçĕн, çавăн пекех вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе, явăçтаракан организацисемпе çыхăнса ĕçлессине йĕркелет, вĕсен ĕçне координацилесе тăрать. Асăннă НФЦ ертÿçи Елена Викторова миçе килĕшÿ туни пирки тĕплĕн каласа кăтартрĕ. Нумай функциллĕ центрсен ĕçĕн пахалăхне çынсем мĕнле хакланине пĕлес тĕллевпе вĕсене анкета ыйтăвĕсене хуравлама сĕннине асăнчĕ. Шăпах çак анкетăсем тăрăх çитменлĕхсене палăртма, клиентсен сĕнĕвĕсене тĕпе хурса ĕç пахалăхне лайăхлатма май килет.

■ **Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА**

# ЫЙТУ ХУРАВ

## Кун-çулĕ музейпа çыхăннă

**Чăваш Ен историне тĕпчес ĕçе пысăк тÿпе хывнă Анна Зерняевăн кун-çулĕ пирки пĕлес килет.**

**И.КОНДРАТЬЕВА.**
Çĕрпÿ хули.

Анна Степановна Зерняевăн кун-çулĕ Чăваш Республикин тавра пĕлÿ музейĕпе /халĕ – Чăваш наци музейĕ/ тачă çыхăннă. Кунта вăл 1944 çулхи кĕркунне ĕçлеме пуçланă. Çав çулсенче ăна Чăваш Енĕн революцичченхи историйĕн пайне йĕркелеме шаннă. Мĕн пур ĕçе пĕччен тенĕ пек пурăçлама тивнĕ. Анна Степановна архив документĕсене тĕпченĕ, экспедицисенче темиçешер уйăх пулнă. Экспозици пĕрчĕн-пĕрчĕн пухăннă.

1946 çулта А.Зерняева Чăваш Республикин историйĕпе çыхăннă çĕнĕ материалсем шырама пикеннĕ. СССР НА Археологи институчĕ, Мускав тата Чăваш патшалăх университечĕсем, Патшалăх истори музейĕ, СССР халăхĕсен этнографи музейĕ, чăваш çĕрĕнче йĕкреленĕ археологи тата этнографи экспедицийĕсене çулсерен хутшăннă. О.Бадер, А.Смирнов, Г.Федоров-Давыдов, Н.Трубникова, М.Акимова, Т.Крюкова, И.Кузнецов, В.Каховский, В.Димитриев, П.Денисов тата ытти паллă ăсчахпа, историкпе, археологпа тата этнографпа пĕрле ĕçлеме тÿр килнĕ.

Музей фондне А.Зерняева ертсе пынă экспедицисенчен илсе килнĕ материалсемпе те чылай пуянлатнă. Авалхи актсен тĕп архивĕнчи истори документĕсем, Пугачевăн Етĕрнери отрячĕн ялавĕ тата ытти нумай япала вырăн тупнă унта. Анна Степановна ăслăлăх тата çут ĕçне хастар туса пынă. Вăл районсене, тĕп хулари предприяти-организацисене часчасах тухса çÿренĕ, тавра пĕлÿ темисемпе лекцисем вуланă, конференцисене, семинар-канашлусене хутшăннă. Анна Зерняева – республикăра музей ĕçне сара-




кансенчен пĕри. ЧППУра тата ЧПУра 15 çула яхăн «Музееведени никĕсĕ» курс ертсе пынă.

1968-1979 çулсенче Анна Степановна музей директорĕнче ĕçленĕ. Çак тапхăрта вăл ăслăлăх-тĕпчев ĕç-хĕлне аталантарма, пахалăхне ÿстерме нумай тăрăшнă. Тивĕçлĕ канăва тухсан та В.И.Чапаев музейĕнче ăслăлăх сотрудникĕнче чылай вăхăт ĕçленĕ.

А.Зерняевăн тава тивĕçлĕ ĕçĕсене Раççей, республика шайĕнчи грамотăсемпе, медальсемпе палăртнă. Унăн ятне Ĕç мухтавĕн кĕнекине кĕртнĕ. 1964 çулта республикăра пĕрремĕшсен йышĕнче «ЧАССР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» ятпа чысланă.

## Çуна – хисеплĕ транспорт

**Ĕлĕк çулла та çунапа çÿренĕ теççĕ. Апла пулать-и вара?**

**В.ЕВДОКИМОВ.**
Комсомольски районĕ.

Чăнах та, Раççейĕн хăш-пĕр регионĕнче çуна хĕллехи транспорт çеç шутланман. Çуна кÿлнĕ лашапа çÿрени чыслă тесе шухăшланă. Уйрăмах чиркÿ çыннисем çак транспорта кăмăлланă. Вĕсемшĕн çуна XVII ĕмĕрчченех хисепре пулнă.

I Петĕр патшана лариччен Раççейре çулсемпе мухтанайман. Çуллахи вăхăтра тумхах, муклашка урлă урапа каçса пĕтеймен. Кунсăр пуçне, кустăрмаллă тарнспортпа танлаштарсан, çунана чылай йÿнĕрех хакпа туянма май килнĕ. Çунан пысăк тепĕр пĕлтерĕшĕ çакăнта.



Хăш-пĕр çĕрте, тĕслĕхрен, Архангельск, Вологда, Кострома кĕпĕрнисенче, çунапа XX ĕмĕрчченех усă курнă. Кунти шурлăхлă тата вăрманлă вырăнсемшĕн вăл чи меллĕ транспорт шутланнă.

## Мĕлке хуласем

**Чернобыль аварийĕ хыççăн Припять хули пушанса юлнине пĕлетĕп-ха. Çакăн пек шăпаллисем çĕр-шывра тата пур-и?**

**А.НИКОЛАЕВ.**
Сĕнтĕрвăрри районĕ.



Припять – мĕлке хуласенчен чи палли. Ăна 1970 çулта никĕсленĕ, хула статусне 1979 çулта çирĕплетнĕ. Европăри чи пысăк Чернобыль АЭСне туса лартсан ăна «атомщиксен хули» теме пуçланă. Припятьре пурнăç вĕресе тăнă. Анчах 1986 çулхи авари хыççăн тавралăхра радиаци шайĕ ÿссе кайнăран çынсем мĕн пур япалине пăрахса хуларан тухса кайнă.

Кадыкчан поселокĕ Магадан облаçĕнче вырнаçнă. Ăна çĕр кăмрăкĕ кăларакансем валли Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче никĕсленĕ. 1996 çулта шахта сирпĕннĕ, ултă çын вилнĕ. Çакăн хыççăн поселока хупнă, çутă тата ăшă линийĕсене татнă, çынсене урăх вырăнта çĕнĕ çурт туянма укçа парса пулăшнă. Поселок пушанса юлнă, мĕлке евĕр курăннă, мĕншĕн тесен кунта пурăннă çынсем тумтирне, кĕнекесене, ачасен теттисене, гаражсенче машинисене тата ыттине те мĕнле пулнă çаплипех пăрахса хăварнă.

Нефтегорска Сахалин облаçĕнче вахтăпа ĕçлекен нефтяниксен поселокĕ пек никĕсленĕ. Шкул, ача сачĕсем ĕçленĕ. Инкек килсе çапиччен пĕтĕмпех йĕркеллĕ пулнă. 1995 çулхи çу уйăхĕн 28-мĕшĕнче çĕр питĕ вăйлă чĕтреннĕ. Хулара пурăннă 3197 çынран 2040-шĕ çурт-йĕр ишĕлчĕкĕсен айĕнче вилнĕ. Нефтегорск пĕтĕмпех арканнă. Влаç поселока йĕркене кĕртес темен, сывă юлнă çынсене Сахалин облаçĕнчи ытти ял-хулана пурăнма вырнаçтарнă. Нефтегорск мĕлке хула ишĕлчĕкĕсене марадерсем паян кунчченех тапăнаççĕ.

Чаган – Казахстанри хула евĕр поселок, Семипалатинск хулинчен 74 çухрăмра Иртыш шывĕ хĕрринче вырнаçнă. Тахçан унта 11 пине яхăн çын пурăннă. Ача сачĕсем, вăтам шкул, офицерсен çурчĕ ĕçленĕ, стадион, лавккасем, хăна çурчĕ пулнă. 1958-1962 çулсенче полигонта çине тăрсах сăнавсем ирттернĕ. 1995 çулта çар чаçĕсене поселокран кăларнă. Пĕчĕк хулана Казахстана панă хыççăн ăна çаратса, аркатса пĕтернĕ. Чаган мĕлке хула статусне илнĕ, сталкерсемпе марадерсен юратнă вырăнĕ пулса тăнă.

Мологa хули Атăла Молога шывĕ юхса кĕнĕ вырăнта вырнаçнă. Ăна XII ĕмĕртех никĕсленĕ. Каярахпа хула пысăк пахалăхлă сĕтпе тата çупа чапа тухнă. Çуркуннехи ейÿ вăхăтĕнче çарансем çине тăрса юлнă юшкăнпа лайăх çитĕнекен курăка ĕнесем çăвĕпех çинĕ. Çавна май паха юр-варпа савăнтарнă.

1935 çулхи авăн уйăхĕнче правительство Рыбинск шыв çыхăнăвне тума йышăннă. Таврари пин-пин гектар çĕр, 700 ял тата Молога хули шыв айне пуласси палăрнă. Хулара ултă чиркÿ пулнă, завод-фабрика, тăхăр вĕренÿ учрежденийĕ ĕçленĕ. Пурнăç вĕресе тăнă вăхăтра хулана пĕтерме пуçланă. 1941 çулхи ака уйăхĕнче юлашки плотинăна туса пĕтерсен çывăхри юхан шывсем çыранран тухнă. Хулана ишме пуçланă. Халăха хăвăрттăн эвакуацилеме тытăннă. Виç çĕре яхăн çын тăван хуларан кайма килĕшмен. Хăшне-пĕрне вăйпа илсе тухнă, урăх ял-хулана куçарнă. Хăшĕсем хăйсем çине алă хунă. Молога манăçа тухнă, тискер историллĕ мĕлке хула пулса тăнă.

## Аваллăха вăрлаççĕ

**Хасар каганачĕн авалхи япалисене чикĕ урлă вăрттăн каçарнăшăн «хура археолога» арестленине пĕлтĕм. Кам вăл? Ăна мĕнле тытса чарма май килнĕ?**

**В.РЕШЕТНИКОВ.**
Шупашкар хули.




Швейцарире Израиль çыннине Менаше /Михаил/ Гольдельмана арестленĕ. Вăл «хура археологие» явăçнă тата Хасар каганачĕн авалхи япалисен контрабандине йĕркеленĕ тесе шухăшлаççĕ.

Гольдельман хасар тата хĕвел тухăç аваллăхĕн эксперчĕ пек тĕнче шайĕнче палăрнă. Ку ыйтусемпе вăл тĕрлĕ МИХре час-часах тухса калаçать. Çав вăхăтрах Раççейре ăна преступник тесе шухăшлаççĕ.

Айăплав версийĕпе специалист Хасар хулашĕсенче саккуна пăсса тĕрлĕ хаклă япала /хĕçпăшал, эрешсем, ылтăн савăтсем/ чавса кăларакан ушкăна ертсе пынă. Унтан вăл вĕсене автомашинăн алăкĕ ăшĕнче пытарса чикĕ урлă илсе каçса сутнă. «Гаарец» кăларăм çирĕплетнĕ тăрăх – хасар аваллăхĕсене коллекционерсем, çав шутра Раççей олигархĕсем те, питĕ хисеплеççĕ, пысăк хак парса туянаççĕ.

Гольдельман Раççейре çуралса ÿснĕ. Темиçе çул каялла Израиле куçнă. Юлашки вăхăтра Лондонра пурăннă. Раççей ăна тахçанах шырать, çĕр-шыва каялла тавăрасшăн. Гольдельмана Швейцарие çитсенех Раççей право хуралĕн органĕсем ыйтнипе арестленĕ. «Хура археологăн» йĕрĕ çине унăн эшкерĕнчи çынна пула тухнă. Хайхискер следствие пулăшма килĕшнĕ, çавна май унăн айăплавне çемçетнĕ.

Израильте хальхи вăхăтра Гольдельманпа Дэн Шапира востоковед-профессор хушшинче суд пырать. Шапира эксперта артефактсене вăрланă тесе уççăн айăпланă. Лешĕ вара суя сăмах сарать тесе ăна суда панă.

Аса илтеретпĕр: Хасар каганачĕ VII-X ĕмĕрсенче Кавказ, Анат Атăлçи, Дон таврашĕнче пулнă, унăн витĕмĕ кÿршĕри çĕрсене те сарăлнă. Ăсчахсен шухăшĕпе – хасарсем пăлхар ушкăнĕнчи тĕрĕк чĕлхипе калаçнă. Хальхи вăхăтра çак йăхран чăваш чĕлхи çеç упранса юлнă.

## Паллă йăхсем

**Иван Юрьевич Трубецкой 1750 çулта вилнĕ хыççăн темиçе ĕмĕр патшалăх службинче тытăнса тăнă вырăс боярĕсен ĕмĕрĕ вĕçленнĕ теççĕ. Камсем пулнă çав боярсем?**

**В.ПОЛИКАРПОВ.**
Куславкка районĕ.

Трубецкой кнеçсем Литва кнеçĕсен Гедиминовичсен династийĕнчен. Çак йăх çыннисем XV ĕмĕр пуçламăшĕнче Мускав кнеçĕсем патне службăна куçнă. XVII ĕмĕр вĕçне Раççейре тăххăрмĕш ăру пурăннă. Вĕсем патшалăхра пысăк вырăнсене /вăйпутсем, приказ пуçлăхĕсем пулнă, ют çĕр-шыв патшисен посольствисене янă/ йышăннă. «Вырăс дворянĕсен йăх историйĕнче» Иван Юрьевича вырăссен юлашки боярĕ тенĕ. Çак ят ун çумне Петĕр патша çамрăк чухнех çыпăçнă.

И.Трубецкой 83 çула çитсе вилнĕ. Шведсем патĕнче тыткăнра 18 çул ирттернĕ. Унта Трубецкой Вреде баронессăна ывăл çураттарнă. Иван Иванович II Кĕтерне патша вăхăтĕнче паллă педагог, çутта кăларакан пулнă. Вăл Ÿнер академине никĕслекенĕсенчен пĕри, унăн президенчĕ пулнă.

Морозов боярсен йăхĕ – ватă Мускаври титулсăр чаплă çынсен шутĕнчи феодал çемйин тĕслĕхĕ. Йăх пуçĕ Новгорода Пруссирен службăна килнĕ Михаил шутланать. Вăл Нева çинчи çапçусенче паттăрлăх кăтартнă «ултă харсăр арçын» шутĕнче пулнă.

Морозовсем Иван Калита тата Дмитрий Донской вăхăчĕсенчех Мускавшăн ĕçленĕ. Анчах вĕсен йăхĕ XVI ĕмĕрти пăлхавлă саманара вăйлă шар курнă. Паллă çемьери чылай çын Хаяр Иван вăхăтĕнче хыпарсăр çухалнă. Борис Морозовăн ача пулман. Пĕртен пĕр еткерçĕн, Глеб Морозовăн ывăлĕн Иванăн та, /унăн амăшĕ – В.Суриковăн «Боярыня Морозова» картининчи Феодосья Урусова/ арçын ача çуралман. Çапла вара Морозовсен йăхĕ вĕçленнĕ. XVII ĕмĕр – çĕр-çĕр çула тăсăлнă йăх историйĕнче юлашки страница пулса тăнă.

Шереметевсен йăхĕ Андрей Кобылăран пуçланнă. Хушамат пиллĕкмĕш ăрури Андрей Безубцевăн хушма ятĕнчен Шереметрен пулса кайнă. Хăш-пĕр верси тăрăх – хушамат тĕрĕк-пăлхарсен «шеремет» /мĕскĕн/ сăмахĕ çинче никĕсленет.

Çемье пултарулăхĕпе çеç мар, патшапа тăванлашнăран та /Андрей Шереметевăн мăнукĕн мăнукне Хаяр Иванăн ывăлне качча панă/ чапа тухнă. Пилĕк мăнукĕ Бояр думин членĕсем пулнă. Шереметевсем Литва, Крым ханĕсемпе çапăçма, Хусан похочĕсене хутшăннă. Вĕсене служба тивĕçĕсене тÿрĕ кăмăлпа пурнăçланăшăн Мускав, Ярославль, Рязань, Чул хула уесĕсенче çĕрсем парса чысланă.

**Кăларăма Валентина БАГАДЕРОВА хатĕрленĕ.**





# КУЛЬТУРА

## Ӗмӗрсен еткерӗ

*Чунри*

## Пӗтӗмпех хамӑртан килет

Культура ҫулталӑкӗнче пурӑнма пуҫларӑмӑр, унран лайӑххине кӑна кӗтетпӗр. Пӗр япалана ӑнланасчӗ: лайӑххине тӑваканӗ никам та мар, хамӑр-ҫке.

Ятарлӑ ҫулталӑкӑн тӗллевӗсем паллӑ: обществӑна культура аталанӑвӗн ыйтӑвӗсемпе тимлӗ пулма хистесси, культурӑпа истори еткерне упраса хӑварасси, Раҫҫей культурине тӗнчене кӑларасси. Ҫавна май ҫӗр-шывра вун-вун, ҫӗр-ҫӗр мероприяти ирттерме палӑртнӑ. Ҫакна та манар мар: Раҫҫей – нумай нациллӗ патшалӑх. Вырӑссемсӗр пуҫне унта тата 180 ытла халӑх пурӑнать. Истори тӗлӗшӗнчен вырӑс культури уйрӑмах пӗлтерӗшлӗ пулсан та, ытти халӑхӑн витӗмӗ те вышкайсӑр пысӑк.

Сӑмахӑмӑра хамӑрӑн, чӑвашӑн, культури пирки тапратма вӑхӑт. Тӗрӗссипе, ҫак ӑнлава мӗнле йышӑнатпӑр-ха? Мӗн кӗрет-ха унта?

Культура – латин сӑмахӗ. Туса илнине, воспитание, вӗренӗве, аталанӑва, хисепе палӑртать вӑл. Ҫыннӑн ӗҫ-хӗл кӑтартӑвӗсем – искусство произведенийӗсем, кӑмӑл-сипет, право нормисем, ыттисем те – кӗреҫҫӗ унта.

Асӑннӑ ӑнлавсене тӗпе хурса ҫапла ыйтар-ха: культурӑллӑ теме пултаратпӑр-и хамӑра? Хуравне тӳрех пама васкар мар. Ыйту тавра пуҫа ватса, шухӑшласа пӑхар. Халӑх воспитанийӗ /халӗ ӑна этнопедагогика теҫҫӗ/ чухӑн пулманнине паллӑ ентешӗмӗр Геннадий Волков академик лайӑх ҫирӗплетсе пачӗ. Несӗлӗмӗрсен кашни сӑмах ҫаврӑнӑшӗнче – Григорий Тимофеев этнограф калашле – ахах-кӗмӗл сирпӗнсе тӑрать. Ку енӗпе ваттисен сӑмахӗсене ҫитекенни ҫук пулӗ. Аса килнисене ҫеҫ илсе пӑхар-ха: асатте кил хушши тытать, асанне – пӳрт ӑшши; аҫун мӑрйине ан тӳнтер; сахал сӑмах сахӑр пек; халӑх пӗр харӑс вӗрсен капан та тӳнет...

Чӑваш халӑхӗ сӑмахлӑх кӗнекисенчен чухӑн мар. Н.И.Ашмаринӑн 17 томлӑ «Чӑваш сӑмахӗсен кӗнеки» пек кӑларӑмсем тӗнчери чылай пысӑк йышлӑ халӑхсен те ҫук. Несӗлӗмӗрсем ваттисене хисеп тунӑ, вӗсенчен иртмен. Пурнӑҫа вӗрентекен сӑмахӗсене чуна илсе ҫитӗннӗ, ҫут тӗнчене килекен ҫӗнӗ ӑрӑва ӑна тӗпе хурса ҫитӗнтернӗ. Ырӑ, пархатарлӑ йӑла ламран лама куҫса пынӑ, паянхи куна ҫитнӗ. Ҫавӑнпа та эпир ку енӗпе чӑнласах пуян халӑх тенӗ пулӑттӑм.

Ал ӗҫ енӗпе те юлса пымастпӑр эпир. Халӑх йӑли пурнӑҫ тӗвви тенӗ авалтанпах. Чӑваш тӗрринче – унӑн пин-пин ҫул йӗрри. Ҫакна паянхи ӑстасен тӗслӗхӗпе те ҫирӗплетме пулать. Мӑн-мӑн асаннесемпе кукамайсен ялти арчисенче упранса юлнӑ, музейсенче хӳтлӗх тупнӑ ал ӗҫӗсенчен пӗрчӗн-пӗрчӗн пухӑнса, пуҫтарӑнса чӑваш ҫӗвви ҫӗнӗрен тӗвӗленет, вӑй илет. Чыс та мухтав ҫав ҫынсене.

Искусство произведенийӗ пирки ҫакна каламалла: ун никӗсӗнче – халӑхлӑх. XIX ӗмӗрти паллӑ дворянинӑн, вырӑссен чаплӑ инженерӗн, ҫул ҫӳревҫин тата писателӗн Николай Гарин–Михайловскин Чӗмпӗр кӗпӗрни витӗр иртнӗ чухне чӑваш хӗрӗсем вӑйӑ картинче шӑрӑнтарнӑ юрӑсене итлеме тӳр килнӗ. Ҫав кӗвӗ-ҫемме вӑл оперӑран та мала хунӑ. Иккӗленӳ ҫук, Федор Васильевӑн «Шывармань» оперине е «Сарпике» балетне, Григорий Хирбю Константин Ивановӑн «Нарспи» поэмине тӗпе хурса ҫырнӑ оперӑна е тата ыттине илер, вӗсем пурте халӑхлӑхпа палӑрса тӑраҫҫӗ. Ҫавӑнпа пирӗн, чӑвашӑн, культура никӗсӗ пур, вӑл ҫирӗп-ха, анчах та вӑхӑт иртнӗ ҫемӗн тумлам та тимӗре шӑтарма пултарать теҫҫӗ-ҫке...

Культура ҫулталӑкне тахҫанах кӗтнӗ. «Никӗсе» ҫирӗплетме, авалхӑха ҫывӑхлатма шаннӑ, шанатпӑр та. Ҫапах та ҫакӑн патне хамӑр туртӑнмасан, чунпа таса, кӑмӑлтуйӑмпа, ӗмӗт-тӗллевпе пуян пулма ӑнтӑлмасан пире никам та пулӑшаймӗ.

■ **Надежда СМИРНОВА**

*Кӗскен*

## Район юбилейне халалланӑ

***Комсомольски районӗшӗн кӑҫал пысӑк пӗлтерӗшлӗ мероприяти чылай. Пӗрремӗшӗ: вӑл Республика кунне йышӑнать. Иккӗмӗшӗ: района йӗркелесе янӑранпа 75 ҫул ҫитет. Ҫавна май культура ӗҫченӗсен те яваплӑха ӳстерме тивет. Паллӑ ҫак пулӑмсене тивӗҫлӗ шайра ирттерес тӗлӗшпе ҫине тӑрса ӗҫлеҫҫӗ те.***

Сӑмахран, район юбилейне пултарулӑх коллективӗсен смотр-конкурсне халалланӑ. Вӑл иртнӗ ҫул вӗҫӗнче Чӗчкен ял тӑрӑхӗнче старт илнӗ. Кӑҫал вара ӑна Аслӑ Ҫӗрпӳелсем малалла тӑснӑ. Концерт умӗн ял тӑрӑхӗн пуҫлӑхӗ Геннадий Ракчеев вырӑнти ӗҫ-хӗлпе паллаштарнӑ.

Концерт программине тӗрлӗ жанр кӗртнӗ. Ял ҫыннисене «Илем» фольклор ансамблӗн юрри-ташши уйрӑмах килӗшнӗ.

Нарӑс уйӑхӗн 6-мӗшӗнче смотр-конкурс Элпуҫ ял тӑрӑхӗнче иртнӗ.

## Ачасем валли – ҫӗнӗ кӗнеке

***Чӑваш кӗнеке издательствинче кӗҫӗн ҫулхи ачасем валли эрешлесе илемлетнӗ «Асанне юмахӗсем» кӑларӑм кун ҫути курнӑ. Унта РСФСР тава тивӗҫлӗ артистки В.И.Голубева репертуарӗнчи 18 юмах кӗнӗ.***

Вера Ивановнӑн пултарулӑх ҫулӗ 1947 ҫулта пуҫланнӑ, 19-ти пикене республика колхоз театрне ӗҫе илнӗ. Ачасене юратни ӑна Ҫамрӑксен театрне, каярах Чӑваш пукане театрне илсе ҫитернӗ. Чӑваш радиора тата телекуравра «Асанне юмахӗсем» передача ертсе пынӑ. Республикӑри чылай ӑрушӑн вӑл «Вера асанне» пек асра юлнӑ.

Кӗнеке издательстви ҫамрӑк вулавҫӑсем валли хӑрасах тепӗр парне хатӗрленӗ: кӗнекепе пӗрле «Чӑваш Ен» ПТРК фондӗнче упранакан юмахсен аудиодискне кӑларнӑ.

## 50 ҫул каялла

***1964 ҫулхи нарӑсӑн 7-мӗшӗнче Удмурт Республикин тӗп хулинче Ижевскра Чӑваш музыкипе литературин кунӗсем пуҫланнӑ. Чӑваш Ен делегацине РСФСР тата ЧАССР искусствӑсен тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ, Патшалӑх премийӗн лауреачӗ Филипп Лукин тата ЧАССР Писательсен союзӗн председателӗ Александр Алка ертсе пынӑ.***

Йышра ҫавӑн пекех Анисим Асламас, Аверий Токарев, Виктор Ходяшев композиторсем, Мефодий Денисов, Лидия Романенко, Тамара Чумакова юрӑҫсем, Георгий Ефимов, Алексадр Галкин поэтсем, Александр Кӑлкан драматург, Петр Львов прозаик тата ыттисем пулнӑ.

Виҫӗ куна тӑсӑлнӑ мероприятисенчен пӗри – Ижевскри культура керменӗнче иртнӗ пысӑк концерт. Курав залӗнче 1200 ҫын пухӑннӑ. Воткинск хулинче те – вырӑс композиторӗн П.И.Чайковскин тӑван кӗтесӗнче – чӑвашсене ӑшшӑн йышӑннӑ.

## Олимпиада ячӗпе – курав

Вӑрнар район тӗп библиотекинче Сочире уҫӑлнӑ хӗллехи Олимпиадӑна халалласа «Вӗри. Хӗллехи. Санӑн» курав йӗркеленӗ. Мӗнпе илӗртет-ха вӑл? Олимпиада историйӗпе, спорт вӑййисемпе, Олимп чемпионӗсемпе тата паллӑ спортсменсемпе паллаштарать. Кунта, сӑмахран, хамӑрӑн ентешсем ҫинчен те вуласа пӗлме пулать.

■ **Надежда ГЕОРГИЕВА**

● ➡ *6, 11, 12 стр.*

*Курав*

## Шартлама сивӗрен – ҫурхи пахчана



Ҫак кунсенче Чӑваш патшалӑх ӳнер музейӗнче уҫӑлнӑ курав чунра ырӑ туйӑм ҫуратать. Унӑн авторӗ – Чӑваш халӑх художникӗ Раиса Терюкалова. Хӗллехи сивӗрен тӳрех ҫуллахи улӑха, ҫурхи пахчана лекетӗн. Вун-вун тӗрлӗ чечек илӗртет хӑй патне. Вӑл ҫеҫ-и? Ас тӑвӑм ӑна вӑхӑтлӑха ачалӑха тавӑрнӑ, тӑван килӗнчи – Улатӑр районӗнчи Кувакинӑри – кивӗ япаласен ӗмӗрне вӑрӑмлатма хистенӗ. Ҫапла майпа хресчен хуҫалӑхӗнчи хатӗрсем натюрмортсенче кун кунлама пуҫланӑ.

Тӑван ҫӗр-шывӑн Аслӑ вӑрҫиччен икӗ ҫул ҫурӑ маларах кун ҫути курнӑ хӗр ача мӗн пӗчӗкрен телейлӗ пулнӑ теме чӗлхе ҫаврӑнмасть. Ҫапах та йывӑр вӑхӑтра та чӗре ырӑ, илем, ҫутӑ пирки ӗмӗтленме чарӑнмасть иккен. Черчен те хыткан аллипе чун кӗртнӗ ӳкерчӗкӗсем вӑй панӑ ӑна, лайӑха шантарнӑ. Ҫав тӗллевпех Шупашкарти ӳнер училищине илсе ҫитернӗ, унта пӗлӳ илнӗ хыҫҫӑн – Питӗре. Кунта вӑл В.И.Мухина ячӗллӗ ӳнерпе промышленноҫ аслӑ училищинче ӑс пухнӑ. Шупашкара ҫав вӑхӑтшӑн ҫӗнӗ специальноҫпа – гобелен енӗпе ӗҫлекен художник пулса – таврӑннӑ. Тӗп хулари пир-авӑр комбинатӗнче пир тӗртекен 3-мӗш мастерскоя ертсе пынӑ.

75 ҫула ҫитрӗ Раиса Фоминична, ҫапах та аллинчен киҫтӗк ямасть-ха.



Халӗ ытларах портретсем ӳкерет.

Куравпа паллашма тата халӑх ӳнерҫине юбилейпе саламлама ЧР культура министрӗ Вадим Ефимов, Раҫҫей халӑх художникӗ Ревель Федоров, Раҫҫей тава тивӗҫлӗ художникӗ Виталий Петров, ҫывӑх юлташӗсемпе ӗҫтешӗсем пынӑ.

■ **Надежда СМИРНОВА**

КУЛЬТУРА

*Юбилей*

# Хӗмӳ пытӑр ӗмӗре



Сӑмахӑм манӑн Вӑрнар районӗнчи Хура Ҫырма ялӗнче ҫуралса ӳснӗ, халӗ Шупашкарта пурӑнакан Алексей Арсентьевич Афанасьев ҫинчен пырать. Ҫак кунсенче унӑн ҫуралнӑ кунӗ – вӑл хӑйӗн сакӑр вунӑ ҫулне паллӑ турӗ. Эпӗ унӑн пурнӑҫне, ӗҫӗ-хӗлне лайӑх сиссе пурӑнакан юлташӗсемпе тусӗсен шутне кӗместӗп. Тӗрӗссипе, хальхи вӑхӑтра куллен курса сывлӑх сунакан пӗлӗшӗ кӑна. Мӗнле калас, ҫын тени вӑл яланах ырӑ кӑмӑл ӑшши еннелле кӑна туртӑнать, усалли, тен, усалли еннелле пуль.

А.А.Афанасьев – профессийӗпе аслӑ пӗлӳ илнӗ актер, А.В.Луначарский ячӗллӗ Мускав театр институтне /ГИТИС/ пӗтернӗ. 1961 ҫулта Чӑваш академи драма театрне ятарлӑ пӗлӳ илсе таврӑннӑ артистсен иккӗмӗш ӑрӑвӗнчен. Халӗ пӗрремӗш ӑрури артистсенчен театрӑн сцени ҫинче ӗҫлекенсенчен чи палли, чи чаплли – СССР халӑх артистки Вера Кузьминична Кузьмина, тӑхӑр вунӑ ҫултан та каҫса кайнӑ тӑн-тӑн этем. Мӑй ҫыххинчи шӑрҫасем пек пурте илемлӗн тӗлӗнтерсе тӑратчӗҫ пултарулӑхӗпе наци театрӗ валли ГИТИС хатӗрленӗ пӗрремӗш кӑларӑмри артистсем. ГИТИСӑн иккӗмӗш кӑларӑмӗнчи артистсен те ҫулӗ ҫухӑнсах пырать ӗнтӗ. СССР халӑх артисчӗ Валерий Яковлев /Чӑваш театрӗн хальхи пултарулӑх ертӳҫи/, Нина Яковлевӑпа Нина Григорьева – иккӗшӗ те чӑн артисткӑсем. А.Афанасьев Чӑваш театрӗнче темшӗн мӗн ватӑличченех ӗҫлесшӗн пулман вара. Ролӗсене мӗнлерех ӑнтарса вылятчӗ театр институтне пӗтерсе килнӗ хыҫҫӑнах. Ҫав рольсем манӑн халӗ те куҫӑм умӗнче. Вӗсем – Монтекки /«Ромеопа Джульетта». В.Шекспир/, Сакердон /«Ӗҫлесе тупнӑ ҫӑкӑр». А.Н.Островский/, Назар Дума тата Балясный /«Малиновкӑри туй». Оперетта. Л.Юхвид тата В.Александров/. Эпӗ уйрӑмах вӑл вылякан Колю тете сӑнарне килӗштернӗччӗ /«Нонка юратӑвӗ». Г.Терентьев пӑлхар писателӗн Ивайло Петровӑн повеҫӗ тӑрӑх хатӗрленӗ инсценировка/. Капмар кӗлеткеллӗ, сасси чӗтренсе тухакан ӑш вӗҫнӗ арҫынччӗ вӑл ҫав постановкӑра. Тыткаларӑшӗпе ҫав тери чӑннӑн та тӗплӗччӗ вӑл. Чӑваш академи драма театрне тепӗр талантлӑ артист хутшӑннӑшӑн савӑнаттӑм унӑн пултарулӑхне тимлесе ларнӑ май. Ытти ролӗ те пайтах пулнӑ унӑн ҫак театр сцени ҫинче: Шалый /«Уҫнӑ ҫерем». М.Шолохов/, Коваленко профессор /«Ирхи сывлӑм». А.Коломиец/, Кирилл Николаевич /«Унӑн айӑпӗ». Л.Родионов/, Леонид Иванович /«Телей» оперетта. И.Молодов, Т.Фандеев/...

Ҫуллахи вӑхӑтра вӑл театрӑн ытти артисчӗпе пӗрле ҫуллахи гастрольсене чунӗпе ынатланса хутшӑннӑ. Тутар, Пушкӑрт республикисенчи, Чӗмпӗр, Куйбышев, Эрӗнпур, Пенза облаҫӗсенчи чӑваш ялӗсенче пулса курнӑ. Спектакльсем хыҫҫӑн вара кӑтартнӑ ӗҫсене сӳте-сӳте явнӑ, ял ҫамрӑкӗсене тӗрлӗ-тӗрлӗ ташӑ вӗрентсе-хӑнӑхтарса хӑварнӑ. Ҫавӑн чухне А.Афанасьев артист ял ҫамрӑкӗсен кумирӗ пулса тӑнӑ.

Ӗҫӗ-хӗлӗ чӑваш театрӗнче пит ӑнӑҫлӑ тапранса кайнӑ пулин те, Алексей Арсентьевич артист карьерин сукмакӗпе мар, хӗсмет сукмакӗпе пӑрӑнса кӗрсе каять. 1964 ҫулхи чӳк уйӑхӗнче республика Культура министерствин аппаратне ӗҫлеме куҫать, унта вӑл искусство пайне ертсе пырать. Йӑпӑр-япӑр хӑпартса лартманах ӗнтӗ Алексей Афанасьева асӑннӑ пая. ГИТИСра вӗреннӗ чухнехи тӗрлӗ енлӗ ӗҫ туҫӑхлӑхне те шута илнӗ-тӗр. Институтра вӑл курс старости, профком членӗ пулнӑ. Лайӑх ӗлкӗрсе пынӑшӑн тата общество ӗҫне хастар хутшӑннӑшӑн Евгений Вахтангов стипендине тивӗҫнӗ. Институтра кӑна мар, Мускав калӑпӑшӗпе те общество ӗҫне хастар хутшӑнать Алексей Афанасьев, лара-тӑра пӗлмен чӑваш ачи. М.В.Ломоносов ячӗпе хисепленекен Мускав университетӗнче аспирантурӑра вӗренекен Г.Я.Хлебниковпа пӗрле вӗсем Мускаври чӑвашсене пухса ентешлӗх йӗркелесе яраҫҫӗ.

Ӗҫчен ҫынна ӗҫ савать тенешкел Алексей Афанасьева 1967 ҫулта КПСС Чӑваш обкомӗн искусство енӗпе ӗҫлекен инструкторне уйӑрса лартаҫҫӗ.

1969 ҫулхи юпа уйӑхӗнче А.А.Афанасьев Ленинградри театр, музыка тата кинематографи патшалӑх институтӗн аспирантурине вӗренме кӗрет. Унта та общество ӗҫне пӑрахмасть. Вӑл – КПСС Ленинград хула комитечӗн ВУЗсене тӗрӗслесе тӑракан канашӗн членӗ. Ҫавӑнпа пӗрлех институт студенчӗсене СССРти халӑх театрӗсен историйӗпе лекцисем вулать.

1972 ҫултан вӑл – ВТО Чӑваш уйрӑмӗн /Чӑваш Республикинчи Театр ӗҫченӗсен союзӗн/ яваплӑ секретарӗ. ЧР Писательсен союзӗнче нумай ҫул ӗҫленӗрен Театр ӗҫченӗсен союзӗн нуши-тертне те кӑштах ӑнланатӑп пек туйӑнать. Мӗн каласси, йывӑр ӗҫ. Анчах та эпӗ Алексей Арсентьевич ӗҫӗ-хӗлӗ пирки тута пӑрса калаҫнине пӗрре те илтмен. Республикӑри Ҫамрӑксен театрӗн тӗп режиссерӗпе Алексей Васильевпа эпӗ нумай вӑхӑтранпа ҫывӑх юлташсем пулнӑран унран А.Афанасьев пирки ыррине кӑна илтнӗ. Мӗнле калас, ҫынсене Алексей Григорьевич витӗр курса тӑратчӗ ҫав. Килӗштерсех кайман ҫыннисем те пулнӑ ӗнтӗ унӑн, анчах ҫавна вӑл пӗрре те палӑртман. Хӑй пӗлнӗ те – ҫитнӗ. Алексей Афанасьев та ҫавнашкал ҫын. Театр ӗҫченӗсен союзӗнче актерсене пулӑшас тесе пайтах ырӑ ӗҫ тунӑ. Ҫакӑншӑн ӑна халӗ те тав тӑваҫҫӗ. Союза ертсе пынӑ хушӑрах Алексей Арсентьевич И.Н.Ульянов ячӗллӗ ЧПУра философи кафедринче истори материализмӗ тата эстетика предметсемпе лекцисем вуланӑ.

Пурнӑҫ – малаллах. Акӑ, Алексей Афанасьев та хӑйӗн сакӑр вунӑ ҫулӗ тӗлне ҫитрӗ. Вӑл, Кушлавӑш таврашӗнче ҫуралнӑскер, Элкер «Хӗн-хур айӗнче» поэминче сӑнарласа кӑтартнӑ Чакка пекех вӑй питти-ха.

А.А.Афанасьев – Чӑваш Республикин культурӑн тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ. Сӑмахӑма ҫирӗм ҫул каялла ҫырнӑ сӑвӑпа вӗҫлесшӗн. Унӑн авторӗ – Георгий Ефимов поэт. Алӑ пусасса вара иккӗн – Светлана Никифоровна Михайловӑпа Георгий Андреевич хӑй – алӑ пуснӑ. Сӑвви, мӗнле калас, паян кун ҫырнӑ пекех. Алексей Арсентьевич ятне.

## Менельник сӑвви

Ӗненес килмест, тӑванӑм,
Утмӑла эс ҫитнине.
Сӑн ҫинче ялтрать-ха санӑн
Ырӑ яшлӑх кулленех.



Калаҫма санпа тӑрсассӑн
Чун ҫӑмӑлланса каять:
Тек нихҫан та хурланмассӑн,
Пуҫ усмассӑн туйӑнать.

Акӑ, ташлама тухатӑн –
Сана кам-ши ҫӗнтерет?!
Ушкӑна эс хӗм паратӑн, –
Хӗмӳ пытӑр ӗмӗре!

Кӑмӑлу, пӗлетӗп: ырӑ,
Малашра – сан ҫут тӗллев.
Хирте акнӑ, вырнӑ тырӑ
Тӑван ял-йышпа пӗрле.

Институт... Мускав хӑвачӗ
Халь те упранать санра.
Пултаруллӑ артист ячӗ
Пурӑнать-ха халӑхра.

Кунӗн-ҫӗрӗн вӑй хуратӑн,
Алексей, культурӑра.
Мӗн пур пек хална паратӑн
Чӑвашри театӑра.

Йӑх-тӗпӳн тымарӗ тарӑн,
Эс – Элкер ӑрӑвӗнчен.
Алексей, ниме ан парӑн
Ҫӗр ҫула ҫывхариччен.

Ҫӗр ҫула ална парсан
Пӗр тӑхтавсӑр ҫамрӑклан!

■ **Хветӗр АГИВЕР**

*Шухӑш*

# Пӑрсайкасси тата Бурзуй

«Хыпарӑн» 2012 ҫулхи 205-мӗш номерӗнче Егор Васильев-Бурзуй профессорӑн «Хушма ят мар, чӑн хушамат» тӗрленчӗкне вуласан тӗпчев ирттерме шухӑшларӑм.

Ӗлӗк-авал хальхи Чӑваш Ен талккӑшӗнче савроматсем, каярах сарматсем хуҫаланнӑ. Вӗсем – тухӑҫ иран чӗлхиллӗ йӑхсем. Халӗ унашкал чӗлхеллисенчен Тухӑҫ Европӑра осетинсем тата питӗ йышлӑ топонимсем – тавралӑх, вырӑн, юхан шыв, сӑрт-ту, хула, ял ячӗсем – сыхланса юлнӑ.

Скиф-сарматсем куҫса ҫӳрекен йӑхсем пулнӑ. Ӑру йӗркипе пурӑннӑ. Ҫавнашкал обществӑри йӑхсем яланах икӗ фратрирен тытӑнса тӑраҫҫӗ. Кашни фратри /ҫак сӑмах грек чӗлхинче «тӑванлӑх» пӗлтерӗшлӗ/ темиҫе ӑрӑва пӑрлештернӗ. Скиф-сарматсен пур йӑхӗн фратрийӗсем ар тата ас ятлӑ. Хӳтӗлеме тата вӑрҫа каймашкӑн фратрисен ятарлӑ ушкӑнсем /дружинӑсем/ пулнӑ. Вӗсене скиф-сарматла пӑр/бӑр, осетинла бӑл тенӗ. Пӑрсай/пӑрсуй/пурсуй – чӑвашлатнӑ сӑмах. Тухӑҫ иран чӗлхинче вӑл пӑрсай-/пӑрсӑй пек те, бӑрзай/бӑрзӑй пек те илтӗнме пултарнӑ.

«Пӑрсай» сӑмаха виҫҫе пайлама май пур: пӑр/с/ай. Сӑмах тӗпӗ – пӑр; /ӑ/с – камӑнлӑх аффиксӗ е камран-мӗнрен пулса кайнине пӗлтерекен аффикс; ай – чӗнӳ падежне е палӑртмалӑха калӑплакан аффикс /ҫак аффикс чӑвашсен те пур: кӑкама – кукамай/. Пӑрсай сӑмахӑн пӗлтерӗшӗ «дружинник» сӑмах пӗлтерӗшӗ евӗрлӗрех.

Васильев-Бурзуев профессор ку сӑмах вырӑссен «борзый» сӑмахӗпе тан мар-ши тесе иккӗленет. Иккӗленӳ пулмалла мар: шӑп та лӑп ҫавӑн пек. Вырӑссем ӑна сармат чӗлхинчен кивҫен илнӗ. Скиф-сарматсен утлӑ ҫар пулнӑ. Вӗсем ҫапӑҫусенче тата сунарта ятарласа вӗрентнӗ вӗшле йытӑсемпе усӑ курнӑ.

Бурзуев хушамат Елмеккей ӑрачӗн пӗр туратӗнчен тухнӑ имӗш. Елмеккей ятӑн варианчӗ питӗ нумай. Акӑ В.Магницкин «Ҫӗв чӑвашсен ячӗсем» кӗнекинче хӗрӗхе яхӑн тупрӑм: Илмек, Илмакай, Илмекей, Илимка, Елмек, Елемка, Алмака, Алмакай, Албекей, Армяк, Армекей, Ермекей, Еремка, Ермак, Ермук, Ирмекей, Иремяк, Ирмака, Ормак, Ормячка, Урмекей, Урмяк, Элмекей, Ярмек, Ярмок, Ярмук, Ярмоха т.ыт.те. Сарматсем те, осетинсем те **р** сасса **л** сасӑпа улӑштарнӑ.

Пӑрсай, Пурсуй ятӑн вариантчӗсем те питӗ йышлӑ. Вӑтӑра яхӑн: Барзай, Барзей, Барс, Барзибек, Бердибяк, Бороска, Борус, Борыз, Борис, Борзай, Бырсай, Борзой, Браска, Палаш, Палус, Парис, Парсубай, Парыска т.ыт.те. Вӗсем пурте пӗр пӗлтерӗшлӗ.

Чӑваш ячӗсене, паллах, вырӑсла вуламалла. Вӗсене XVIII-XIX ӗмӗрсенчи вырӑсла документсенчен ҫырса илнӗ. Калаканни чӑваш, итлекенни тата ҫыраканӗ вырӑсран пӗр ятах темиҫе тӗрлӗ ҫырма пултарнӑ.

■ **Петӗр МУЛЬТИЕРСЕМ,**
**профессор.**
Мускав хули

●➡ *11, 12 стр.*

Сывлăх

# Пациентсен шкулĕ уçăлчĕ



*Нарăс уйăхĕн 12-мĕшĕнче ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствин Республика клиника больницин нефрологи уйрăмĕнче пӳрен вăраха кайнă чирĕпе нушаланакансен шкулĕ ĕçлеме тытăнчĕ. Ăна çак амакпа çыхăннă ыйтусене тĕпчекен центрăн вĕренӳ миссийĕпе килĕшӳллĕн йĕркеленĕ.*

ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствин тĕп специалисчĕ – нефрологĕ Ольга Автономова пĕлтернĕ тăрăх – асăннă мероприяти пĕрремĕш те мар, юлашки те пулмĕ, мĕншĕн тесен пӳрепе чирлекенсене тивĕçлĕ условисем туса парасси – паянхи медицинăн приоритетлă тĕллевĕсенчен пĕри.

«Заняти ирттермешкĕн Тутар Республикинчи ĕçтешсем хаваспах килĕшрĕç. Ку енĕпе кӳршĕсем пухнă опыт чăннипех пуян. Çавна май сиплевçĕсемшĕн те, пациентсемшĕн те вĕсен сĕнӳ-канашĕ усăллă пуласси иккĕлентермест. Çакнашкал шкулсем унта йĕркеллĕ те ăнăçлă ĕçлеççĕ», – палăртрĕ Ольга Ильинична.

Сывă та таса пурăннă чухне пирĕн организмра пӳре мĕнле ĕçленĕ пирки пуçа ватмастпăр. Амак сиксе тухсан ун çинчен тӳрех аса илетпĕр. Специалистсем çирĕплетнĕ тăрăх – мăшăрлă çак органтан пĕриех çын организмне туллин тивĕçтерсе тăма пултарать. Паллах, сывă пулсан ĕнтĕ...

Хусан патшалăх медицина академийĕн урологипе нефрологи кафедрин докторĕ, медицина ăслăлăхĕн кандидачĕ Миляцена Хасанова занятие пухăннисене – сиплевçĕсемпе пациентсене – пӳрен вăраха кайнă чирĕ кăларса тăратнă çивĕчлĕхсемпе паллаштарчĕ, вĕсене сирмелли мелсем çинче чарăнса тăчĕ. Тĕрĕссипе, çак амак пĕтĕм организма хавшатма пултарать – чĕререн тытăнса шăмă мими таранах. Ăна пула япаласен ылмашăвĕ пăсăлать, щит евĕр пар йĕркеллĕ ĕçлеймест тата ытти те.

Чирлисен тивĕçлĕ сиплев илсе тăнисĕр пуçне сывă пурнăç йĕркине тытса пымалли каламасăрах паллă, унсăр пуçне апатланăва та тухтăрсемпе канашласа палăртма тивет. Сиплев тенĕрен, эмелсĕр пуçне юна вăл организмра вăрах тытăнса тăнă каяшсене пула наркăмăшланма пултарнине шута илсе çирĕплетнĕ вăхăтра тасатса тăмалла: гемодиализ мелĕпе-и, ыттипе-и...

Апла пулин те ятарлă аппарата сывă пӳрепе танлаштарма çук. Çавăнпа пациентсем суйлама пултараççĕ: е искусствăлла пӳре, е трансплатаци.

Пӳрене куçарса лартассипе çыхăннă ыйтусене ТР Сывлăх сыхлавĕн министерствин штатра тăман трансплатологĕ, Хусан патшалăх медицина академийĕн урологипе нефрологи кафедрин ассистенчĕ Шамиль Галеев уçăмлатрĕ, трансплатацие кайма хатĕрленекен пациентăн операци тутариччен тата ун хыççăн хăйне епле тытмаллипе паллаштарчĕ. Кун пек чухне «Кĕтекенĕн листокĕнчи» мĕн пур информацие тĕпе хурса çирĕп йĕркене пăхăнмалла иккен: сывлăха упрамалла, юнри гемоглобин шайне, организмри фосфорпа кальци виçине, юн пусăмне тĕрĕслеттерсе тăмалла тата ытти те.

Ольга Автономова ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствин нефрологи центрĕн аталанăвĕ пирки тĕплĕн каласа пачĕ. Вăл палăртнă тăрăх – унăн малашлăхĕ пысăк. Трансплатаци ирттермешкĕн ирĕк илмелли ĕçлĕ хутсене хатĕрленĕ, тивĕçлĕ органсене çитернĕ. Кăткăс оборудовани туяннă. Хальлĕхе вара пирĕн ентешсен донор пӳрине тивĕçмешкĕн Чул хулари сиплев учрежденине каймалла. «Кĕтекенсен листокне» йĕркеленисем 76-ăн. Вĕсен сывлăхĕн мониторингне тăтăшах ирттереççĕ.

Заняти пациентсен ыйтăвĕсене хуравланипе вĕçленчĕ. Тутар Республикинчен килнĕ медицина ăсчахĕсем пӳре чирĕ пирки ансат чĕлхепе ăнлантарни пухăннисене чăннипех килĕшрĕ, сĕнӳ-канашĕ те усăллă пулчĕ.

**Валентина СМИРНОВА**

# Кăçалхи тĕллевсене палăртрĕç

*Вăрмар районĕнчи тавра пĕлӳçĕсен «Тăван ен – тăван кил» клубĕ кăçал пĕрремĕш ларăвне ирттерчĕ. Йышра – музейçăсем, кĕнеке авторĕсем.*

Культура çулталăкĕнче пурнăçламалли ĕç чылай: ялсен историне тĕпчемелле те кĕнекелесе кăлармалла. «И.Я.Яковлев тата Вăрмар тăрăхĕ» темăпа шыравсем ирттермелле, Тăван çĕр-шыва паттăррăн хӳтĕленĕ ентешсем çинчен çĕннине тупмалла, халăха пĕлтермелле, тавра пĕлӳçĕсен çĕнĕ кĕнекисене хакламалла, вулакан патне çитермелле... Ку енĕпе тĕпчевçĕсем шкулсенче, ялти вулавăшсенче пулаççĕ, тĕл пулусем йĕркелеççĕ.

Кĕркунне Чăваш халăх писателĕ Василий Алентей çуралнăранпа 95 çул çитет. Халĕччен те, çулленех, юпа уйăхĕн 16-мĕшĕнче унăн пултарулăхне юратакансем Кĕтеснере пухăннă-ха, ял-йышпа пĕрле литература уявĕ ирттернĕ. Кăçалхи юбилее сумлăрах йĕркелесшĕн. Районти «Хĕрлĕ ялав» хаçат редакцийĕ, тавра пĕлӳçĕсен «Тăван ен – тăван кил» клубĕпе «Вăрмарсен Шупашкарти ентешлĕхĕ» общество организацийĕ Василий Алентей ячĕллĕ литература премине йĕркеленĕ. Паянхи куна 11 çын лауреат ятне тивĕçнĕ. Вĕсене Диплом тата кăкăр çине çакмалли паллă панă. Шел, укçан хавхалантармалли май çукрах-ха. Лауреатсен хушшинче пенсионерсем ытларах пулни те шухăшлаттарать. Хăш-пĕр критик: «Алентей кĕнекисенче тенденцилĕх кăна. Ял хуçалăх темипе çырнă хайлавĕсем паянхи вулакана пачах та тивĕçтермеççĕ», – тенипе тавра пĕлӳçĕсем пĕрре те килĕшмеççĕ. Халăх писателĕн ятнесумне çĕклес тĕллевпе кăçалхи конкурса шкулсенче аслă класра вĕренекенсене те явăçтарасшăн. Илемлĕ çырма пĕлекенсем, тăван чĕлхепе сăмахлăха юратакансем лауреат пулччăр, аслă шкулсене чăваш чĕлхипе литературин уйрăмĕсене, журналистика енĕпе вĕренме кайма хавхаланччăр.

**Василий ЦЫФАРКИН**

Кун-çул

# Ĕçчен çынна ял-йыш мухтать

*Куславкка районĕнчи Чăршкасси ялĕнче пурăнакан Семеновсем хаçат-журналпа питĕ туслă. Вĕсем кашни çул «Хыпар», «Кил-çурт, хушма хуçалăх», «Чăваш хĕрарăмĕ» çырăнса илеççĕ. Пичет кăларăмĕсене уйрăмах кил хуçи Георгий Семенович кăмăллать. Хаçатсенче кун çути курнă кăсăклă статьясемпе илемлĕ хайлавсене пĕр йĕрке юлмиччен вуласа тухать.*

Çак кунсенче 80 çулхи юбилейне паллă тăваканскерĕн ачалăхĕ çăмăл килмен. Ашшĕ Семен Семенович Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче пуç хунă, çавăнпа амăшĕн Степанида Ивановнăн пилĕк ачине пĕчченех ура çине тăратма тивнĕ. Вăрçă çулĕсем уйрăмах йывăр килнĕ, ачасем те çитĕннисемпе танах ĕçе кӳлĕннĕ. Георгий те пиччĕшĕпе пĕрле хире тырă вырма тухнă, аслисене авăн çапма пулăшнă...

«6 çулта чухнех асатте мана çăпата тума вĕрентрĕ. Карач пасарне те хам ăсталанă çăпатасене сутма çӳреттĕм», – аса илет Георгий Семенович. Ачаран ĕçе хăнăхса ӳснĕскер пурнăçне ял хуçалăхĕпе çыхăнтарнă. Малтан колхозра, унтан «Аниш» совхозра вăй хунă: электрик, водитель, строитель... Кашни çул кӳршĕ республикăсене вăрман касма çӳренине халĕ те манаймасть вăл. Уйрăмах платник ĕçне ăста пулнăран ял çыннисем патне пӳрт-хуралтă хăпартма васканă. Тивĕçлĕ канăва тухсан та ĕçрен пăрăнман, хĕрӳ вăхăтра ыттисемпе пĕрле хире тухнă. Халĕ те ачисемпе мăнукĕсене хуçалăхра пулăшать, ĕç йĕркине кăтартса пырать.

1969 çулта Георгий Семенов кӳршĕ хĕрĕпе, Зинаида Васильевна Шедиряковăпа, çемье çавăрнă. Мăшăрĕ те ĕмĕрĕпе совхозра тăрăшнă, хăмлаçăсен бригадин хастарĕ пулнă. Вĕсем 4 ача çитĕнтерсе пурнăç çулĕ çине кăларнă. Паян аслашшĕпе асламăшне 7 мăнук куç тулли телей парнелет. «Ĕçчен çынна ял-йыш мухтать», – теççĕ. Семеновсене ялта хисеплеççĕ, таврара та ырă ят çĕнсе илнĕ вĕсем.

**А.МИХАЙЛОВ**



● *Георгий Семенович амăшĕпе тата мăнукĕсемпе.1999 çул.*

Йышăну

# Тĕп инспектор сăнаса тăрĕ

*Федерацин Чăваш Республикинчи тĕп инспекторĕ Геннадий Федоров Раççей Федерацийĕн Президенчĕн Шупашкарти йышăну пӳлĕмĕнче çынсене хăйсен ыйтăвĕсемпе йышăннă.*

Тĕп хулари 11-мĕш вăтам шкулта вĕренекенсен ашшĕ-амăшне çак вĕренӳ заведенине 1-мĕш вăтам шкулпа пĕрлештереççĕ текен сас-хура пăшăрхантарнă. Çавна май ачасен пĕр пайне унта куçараççĕ имĕш. Çыру çыракансем микрорайон территорийĕнче нумай хваттерлĕ тăвата çурт тума тытăнни, малашлăхра ачасен шучĕ ӳсесси çинчен пĕлтереççĕ, шкула упраса хăварма ыйтаççĕ. «Шкулсем хăйсен расписанийĕпе ĕçлеççĕ, ачасене пĕр шкултан теприне куçарма палăртман», – тенĕ ашшĕ-амăшĕн представителĕсене Шупашкар хула администрацийĕн вĕренӳ управленийĕпе ЧР Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерствин специалисчĕсем. Тĕп инспектор асăннă ыйту мĕнле татăлнине хăй тĕрĕслесе тăрĕ. «Эпир вĕренекенсен интересĕсене шута илĕпĕр», – пĕлтернĕ Геннадий Семенович.

Муркаш районĕнчи Мăн Сĕнтĕр ялĕнчи Çĕнĕ урамри 17-мĕш çуртра пурăнакансен шухăшĕпе – ял тăрăхĕн пуçлăхĕ тăвата хваттерлĕ пурăнмалли çурта авариллисен йышне, унти çынсене 2013-2017 çулсенче хăтлă çуртсене куçармалли программăна кĕртесшĕн мар иккен. Чăнлăхĕ çапла: çак программăна 2012 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕччен пурăнма юрăхсăр тесе йышăннă çуртсене кăна кĕртеççĕ. Хальхин пĕтĕмлетĕвĕ – «2013 çулхи чӳк уйăхĕн 7-мĕшĕ». Çитменнине 2010 çулхи ака уйăхĕнче газ хуранĕ çурăлнипе çак çуртра пурăнакансем çут çанталăк ырлăхĕпе усă кураймаççĕ. Газпа тивĕçтерекен организаци çурт питĕ кивĕ пирки унта газ пама тăхтать.

Тĕп инспектор вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене йывăр лару-тăруран тухмалли çул-йĕр шырама сĕннĕ. Йышăнура ытти çивĕч ыйтăва тишкернĕ. Вĕсене Г.Федоров тĕп инспектор хăй сăнаса тăрĕ.

**А.СТЕПНОВ**

Сочи – 2014

# Раççей спортсменĕсен хастарлăхĕ чакман-ха

*Сочире иртекен Олимп вăййисенче хĕрӳ тупăшусем пыраççĕ. Уйрăмах унта Норвеги, Канада, Германи тата Нидерланд спортсменĕсем ăнăçлă ăмăртаççĕ.*



● *Татьяна Волосожар, Максим Траньков, Ксения Столбова, Федор Климов.*

Раççей команди 11 наградăпа хальлĕхе 7-мĕш вырăнта. Пирĕн пухмач кунран кун пуянланать. Акă ытлари кун Челябинск пики Ольга Фаткулина конькипе чупакансен хушшинче 500 метрлă дистанцие иккĕмĕш вĕçлесе «кĕмĕл» çĕнсе илчĕ. Раççей чемпионки тата рекордсменки, тĕнче чемпионачĕн çĕнтерӳçи Олимпиадăна иккĕмĕш хут хутшăнать. 2010 çулта вăл чи лайăх 10 спортсмен йышне те кĕрейменччĕ, ку хутĕнче ăнăçу унăн енче пулчĕ. Чăн та, Сочире фигуристсемпе конькипе чупакансене уйрăмах ăнать. Аса илтеретпĕр: маларах Виктор Анпа Ольга Граф пире икĕ медальпе, фигуристсен команди «ылтăнпа» савăнтарчĕç.

Юн кун та эпир хамăр спортсменсемшĕн ытларах пăлхантăмăр: пăр çинче эрешлесе ярăнакансем медальсемшĕн тупăшрĕç-çке. Раççей фигурисчĕсем, иртнĕ Олимпиадăна шута илмесен, кашни ăмăртура пьедесталăн чи çӳллĕ картлашки çине хăпарнă. Максим Марининпа Татьяна Тотьмянина, Роман Костомаровпа Татьяна Навка, Антон Сихарулидзепе Елена Бережная, Евгений Платовпа Оксана Грищук тата ытти чемпиона тĕнчипех пĕлеççĕ. Ку хутĕнче те пирĕннисем çĕр-шыв ятне ямарĕç. Максим Траньковпа Татьяна Волосожар иккĕмĕш «ылтăн», Федор Климовпа Ксения Столбова /вĕсем те командăсен ăмăртăвĕнче Олимп чемпионĕн ятне тивĕçнĕ/ «кĕмĕл» медаль çĕнсе илчĕç.

Виçĕм кун «Лаура» комплексĕн трасси çинче те хĕрӳ пулчĕ, унта биатлонистсем тупăшăва тухрĕç. Раççей спортсменĕ Евгений Гараничев 20 километрлă дистанцире, ăмăрту пуçламăшĕнчех малта пыраканскер, виççĕмĕш кăтартупа палăрчĕ. Франципе Германи спортсменĕсене темиçе çеккунт кăна выляса ячĕ. Ку – биатлонистсен иккĕмĕш медалĕ. Аса илтеретпĕр: нарăсăн 8-мĕшĕнче Ольга Вилухина спринтерсен чупăвĕнче пухмача «кĕмĕлпе» пуянлатнăччĕ. Кĕçнерни кунах Альберт Демченко, Татьяна Иванова, Александр Денисьев тата Владислав Антонов çунаçăсем эстафета пĕтĕмлетĕвĕпе пьедесталăн иккĕмĕш картлашки çине хăпарчĕç.

**А.ПЕТРОВ**



● *Евгений Гараничев.*



● *Ольга Фаткулина.*

# Сирĕн флагшток мĕн çӳллĕш?

*Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев кĕçнерни кун Пĕтĕм тĕнчери «Terra Viva" /Чĕрĕ Планета/ экологи юхăмĕн председателĕпе, РАЕН академикĕпе, М.В.Ломоносов ячĕллĕ МПУ профессорĕпе, паллă телеертӳçĕпе, «Раççейри чи çӳллĕ флагшток» проект ертӳçипе Николай Дроздовпа курнăçнă.*

Тĕл пулăва ЧР культура тата спорт министрĕсем Вадим Ефимовпа Сергей Мельников, Шупашкар хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов, Пĕтĕм тĕнчери общество наукисен академийĕн президенчĕ, РАО академикĕ Лев Кураков тата «Раççейĕн чи çӳллĕ флагштокĕ» проектăн управляющи директорĕ Олег Олейник хутшăннă.

Асăннă проектпа килĕшӳллĕн Мускавра Раççейри чи çӳллĕ флагштока /175 м/ вырнаçтарасшăн, çавăн пекех çĕр-шывăн тĕрлĕ хулинче 105 м çӳллĕш тăвата флагшток пулмалла. Вĕсем Çурçĕр, Кăнтăр, Хĕвел тухăç тата Хĕвел анăç чиккисене сăнарлĕç, çавнашкал пиллĕкмĕш флагштока Шупашкарта лартасшăн – вăл Раççей чĕрине палăртĕ. Николай Дроздов ăнлантарнă тăрăх – Чăваш Ене çĕр-шыв чĕрин символĕ вырăнне суйласа илни республика вырнаçăвĕпе, çавăн пекех кунта 128 национальноç представителĕсем туслă пурăннипе çăлтавланнă.

Тĕл пулура проекта пурнăçламалли площадкăсене сӳтсе явнă. Темиçе вариант пур: Хĕрлĕ лапамра, Юрă уйĕнче, заливран Оперăпа балет театрĕ еннелле утмалли пусма патĕнче, Трактор тăвакансен культура керменĕн çывăхĕнче.

«Çак проекта пурнăçлани Раççей ялавне, патшалăхăн тĕп символĕсенчен пĕрне, хисеплессине çирĕплетĕ. Çамрăк ăрăва Тăван çĕр-шыва юратма вĕрентсе пирĕн мĕн пур йывăрлăха çĕнтерсе малалла талпăнмалла», – тенĕ Чăваш Ен Пуçлăхĕ. Юлашкинчен Николай Дроздов Михаил Игнатьева 2013 çулшăн Пĕтĕм тĕнчери экологин мир премийĕн лауреачĕн Дипломне панă.

**Ю.ПАВЛОВ**

Тĕл пулу

# Олимпиадăна хутшăнни – пысăк савăнăç



*Сочири Олимп вăййисенче хĕрӳ тапхăр: спортсменсем кунсерен старта тухса Олимп медалĕсемшĕн вăй виçеççĕ. Хăш-пĕр дисциплинăра ăмăртусем вĕçленеççĕ, çавăнпа чылайăшĕ килелле çул тытать. Акă пирĕн спортсменка Елена Муратова та тăван ене таврăнчĕ. Чукун çул вокзалĕнче ăна çăкăр-тăварпа, юрă-ташăпа кĕтсе илчĕç.*

Аса илтеретпĕр: 42 çул хушшинче пĕрремĕш хут пирĕн ентеш хĕллехи Олимпиадăра республика чысне хӳтĕлерĕ. Шел те, могул енĕпе тупăшнă пике финала тухаймарĕ, ăмăрту пĕтĕмлетĕвĕпе вăл 21-мĕш вырăн йышăнчĕ. «Паллах, эпĕ хамăн кăтартупа кăмăлсăр, финала тухма пĕр утăм кăначчĕ. Унта çĕннине нумай пĕлтĕм, опыт пухрăм. Тăван çĕр-шывра иртекен Олимпиада уйрăмах пĕлтерĕшлĕ, стартра тăнă чухне çынсем хавхалантарни вăй-хăват хушать. Кунсерен тренировкăна тухнăран Сочи хулипе паллашма вăхăт çитмерĕ. «Роза-Хутор» та çав тери пысăк, Олимп ялĕнче те уçăлса çӳреме аван. Пурăнмалли пӳлĕмсем çутă та хăтлă. Телекурав çукки вара кĕтменлĕх пулчĕ», – терĕ Елена пуйăсран тухсан.

Пирĕнпе сыв пуллашсан спортсменка канма кайрĕ тетĕр-и? «Олимпийский» стадиона çамрăк хоккеистсем патне васкарĕ, вĕсемпе пĕрле каток çине тухрĕ. «Тахçантанпах конькипе ярăнман. Ача чухне эпĕ фигуристсен секцине çӳренĕ. Анне – тренер, вăл мана пĕчĕклех конькипе ярăнма вĕрентрĕ», – калаçрĕ спортсменка арçын ачасемпе.

Спортăн тĕнче класлă мастерĕ, Европа кубокĕн çĕнтерӳçи Елена Муратова ĕнер Чăваш Ен Пуçлăхĕпе Михаил Игнатьевпа тĕл пулчĕ. «Спортра нихăçан та çăмăл мар: медаль çĕнсе илсен савăнатăн, ăнмасан пăшăрханатăн. Фристайл – экстремаллă спорт, çавăнпа уйрăмах йывăр. Куракансемшĕн вăл кăсăклă, спортсменсене ӳксе аманасси шиклентерет. Çапах та эсир хăрамастăр, кашни ăмăртура хăюллă та маттур. Олимп вăййисене хутшăнса Чăваш Ен спорт регионĕ пулнине тепĕр хут çирĕплетрĕр, пирĕншĕн пысăк çĕнтерӳ вăл. Эсир малашне те çитĕнӳсемпе палăрасса шанатăп», – терĕ Михаил Васильевич. Елена Муратовăпа унăн тренерне Валерий Васильева Тав çырăвĕпе, сехетпе тата укçан преми илмелли сертификатпа чысларĕ.

«Кашни спортсмен Олимп тӳпине хăпарма ĕмĕтленет. Мана ăнчĕ, эпĕ Олимп вăййисен «çимĕçне» тутанса куртăм. Чăваш Ен халăхне ĕмĕтĕме пурнăçлама пулăшнăшăн тав тăватăп. Кунта мана питĕ ăшшăн кĕтсе илеççĕ, çавăнпа Шупашкара çунатланса таврăнатăп», – хавхаланчĕ спортсменка.

Тĕл пулăва çавăн пекех ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ Юрий Попов, ЧР физкультурăпа спорт министрĕ Сергей Мельников, Шупашкар хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов тата ыттисем хутшăнчĕç. Вĕсем те олимпçăна саламларĕç, хăйсен шухăш-кăмăлĕпе паллаштарчĕç. Фристайла аталантарма спорт объекчĕсем кирлине палăртрĕç. Валерий Васильев пĕлтернĕ тăрăх – Елена Муратова Чăваш Ене пурăнма куçса килсен çамрăксем фристайл енĕпе кăсăкланма тытăннă. Вĕсен йышĕ сахал мар, анчах тренировка ирттерме услови çукки чăрмантарать. Михаил Васильевич та çак ыйтăва кун йĕркине кĕртме хушрĕ.

**М.АНДРЕЕВ**

КУЛЬТУРА

# "Этемлĕх чăнлăхĕ янăратса ярать те чан..."

**/Петĕр Эйзинăн илемлĕх тĕнчинче сăнланнин метафизика тата интертекст пĕлтерĕшĕ/**

Сар уйăха сăна,
ăнлан ун шухăшне,
тен, калĕ вăл сана
тĕнче вăрттăнлăхне.

"Аваллăх кĕввисем" ярăмри çак сăвва литература манифесчĕ темелле ахăртнех.

Петĕр Эйзин чăннине шыранă, Чăнлăх пирки сĕмленнĕ-тĕшмĕртнĕ. "Эй, кам пĕлет, мĕскершĕн вут хыпса илет те чĕлхеленет?!" – тет çирĕм икĕ çулти сăвăç "Аслати чечекĕ" поэмăра. Вăл хăйне аслати чечекĕ пек, вут чĕлхи пек курать. "Тĕлĕкре те мана аслати çапнă", – тет вăл.

"Япаласене хăй ячĕпе калар" кĕнекери Мигель де Унамуно шухăшне тăнлар: "Эп ялан калана, малашне те çине-çинех каласшăн: "ÇЫННА тулашра мар – шалта шырамалла, вилĕмсĕрлĕхе – вырăнти тата вăхăтлăх пулăмсен е япаласен тарăнăшĕнче". Модернист мар – "вилĕмсĕрлĕхист" пулар. Поэт пулас тесен пирĕн темле майпа ача пулса юлмалла. Поэт чунĕпе ачалăхра пурăнать. Коро художник: "ÇУТ ÇАНТАЛĂКА курас текенĕн чунĕ ача чунĕ пулмалла", – тенĕ. Наци çыравçин тĕнчене ача пек курмалла тата туймалла".

Петĕр Эйзин тĕнче литератури тÿпинчи ăстасемпе пĕр сывлăшпа сывлать, унăн чунĕ, вĕсенни пекех, Чăнлăхшăн касăлать:

Çиçĕм çĕççи
çиçет ман алăра.
Чăнлăхран
шăратса тунă вăл çĕççе,
аслати
туптанă хурçине.

А.Лосев "Эстетика Возрождения" ĕçĕнче: "Çĕн чĕрĕлÿ вăл – титанизм", – тет. Грек мифологийĕнче титансем – Гея /Çĕр/ тата Уран /Тÿпе/ ачисем. Çĕн чĕрĕлÿн космосла тупсăмне, пĕлтерĕшне Çеçпĕл Мишши "Çĕн Кун аки" сăвăра тĕптĕрĕс çырса кăтартнă:

/.../Хăватлă, çĕн чĕреллĕ çĕн
ĕмĕр чăвашĕ,
Хул пуççипе кăвак пĕлĕте
перĕнсе,
Кун-çул уйне тухса хĕвел
тумтир тумланĕ.

Петĕр Эйзин хăйне аслатипе /Çĕраннепе Тÿпе-аттен чĕрĕ тĕввипе/ çыхать. Çеçпĕлĕн "Çĕн кун акинчен" икĕ кун маларах çырăннă "Чăваш! Чăваш!.." сăввинче Эйзин-аслати тивĕçĕ-тĕллевĕ уçăмланать:

Чăваш чĕлхи, çĕлен сăххи,
Хаяр аçа çаппин уххи
Пулса кĕр çĕнĕ ĕмĕре.

"Художник принципĕ: "Эп хăятăп!" – çырнă Юрий Зайцев кун кĕнекинче Хăюсăр гени пулмасть. Çеçпĕл çакна ăнланнă. Хăюлăхпа ылтăна вăл пĕр рете лартать: "Чăваш чĕри! Хăюлăх вучаххи // Пулса тăр! Ылтăн шăратан // Хуран пек чашкăрса вĕре", "Тăван чăваш хăюллине, // Вăл вăйлине курасчĕ ман".

Çеçпĕлĕн витĕр куракан чунне ĕненес пулсан – Çĕн Кун Чăваш çĕрне пин, çĕр пин çăлтăр акать. 1960 çулсенче çакăн пиркиех Анатолий Миттов та шухăшланă. Акни мĕншĕн шăтса тухманнине сăнарласа кăтартнă. "Акаçă" ÿкерчĕкре акнине тискер вĕçен кайăксем пĕтерсе пыраççĕ.

"Эйзинран пысăкрах поэт – çук", – тет Иосиф Дмитриев. Çĕн Кун /Çеçпĕл сăвви те, Анатолий Миттовăн "ÿкерчĕкĕ" те – Мартин Хайдеггер философийĕ шайĕнче/ Чăваш çĕрне пин, çĕр пин çăлтăр акнă. Пĕр Эйзин кăна шăтса тухнă. Сăвăçсем татах та пур, анчах вĕсем Çĕн Кун акнисем мар. Çĕн Кун акнă çăлтăр паллине Çеçпĕл Хайдеггерла тĕрĕс сăнарлать:

Çĕн Кун акин шăтма вăхăт çитсен,
Çĕн Кун умне хура çĕр айĕнчен,
Хĕвел калчи пулса, хĕвеллĕн
сарăлса, хăюллăн
Чăваш çыннин кун-çулĕ тухĕ.

Çĕн Кун акине Çĕн чĕрĕлÿ теме те пулать. Çĕн чĕрĕлĕве пултаракан çын чи малтан – сăнакан çын. Эйзин хăйĕн манифестĕнче сар уйăха, сар чечеке, сар кайăка, ват юмана сăнама ыйтать. Сăвăçпа пĕрремĕш хут калаçнă чухне те мана вăл сăнама сĕнчĕ: "Чăваш халăх сăмахлăхне пĕтĕмĕшле сăна, искусство енчен тишкер. Мĕнле йĕркеленĕ, ăсталанă. Тупмалли кашни юмахра çĕннине уçма пулать. Чĕлхе пуянлăхĕ – нихçан иксĕлми çăл куç".

Чăваш литературине, культурине 1987 çултанпа тĕпчетĕп. Пултарулăх çыннисен ĕçĕсене, тексчĕсене кăна мар, хăйсемпе те пайтах калаçнă, хутшăннă. Эйзинсăр пуçне пĕр çын та сăнама кирли пирки калани ас тумастăп.

Çĕн чĕрĕлÿ символĕ – Леонардо да Винчи. 1902 çулта Дмитрий Мережковский "Воскресшие Боги /Леонардо да Винчи/" роман çырнă. Художника вăл сăнакан çын пек, сăнавçă пек кăтартать. "Çут çанталăк пулăмĕсене тĕпчени вăл - турра юрăхлă ĕç, – тет Леонардо хăйĕн вĕренекенĕсене. – Кĕлĕ тунипе пĕрех вăл. Сахал пĕлекен сахал юратать. Енчен те эсĕ турра сана вăхăтлăх панă ырлăхсемшĕн юратан пулсан /унăн вĕçĕмсĕр ыр кăмăлĕпе хăвачĕшĕн мар/ эсĕ çăкăр татки пăрахса парасса кĕтсе хÿрине вылятакан тата хуçа аллине çуллакан йытăпа тан. Шухăшлăр-ха, епле хытăрах юратнă пулĕччĕ йытă хăйĕн хуçине, енчен те унăн чунне тата ăсне ăнланас пулсан. Ас тăвăр, ачамсем: юрату вăл – пĕлÿ хĕрĕ: пĕлÿ мĕн чухлĕ тĕрĕсрех, çавăн чухлех юрату вутти те хытăрах çунать. Евангелире те каланă: çĕленсем пек тăнлă, кăвакарчăнсем пек айван пулăр".

"Джованни Бельтраффио кун кĕнекинче", романăн пиллĕкмĕш сыпăкĕнче, Мережковский Леонардо пирки акă мĕн çырать: "Епле вăл пĕлесшĕн çунать. Ку кăмăлĕ унăн иксĕлми. Çут çанталăкшăн вăл епле ырă, вăрттăнне куракан куç. Çын курманнине курма пĕлет вăл! Кирек ăçта та вăл мĕн курнипе савăнса тăранаймасть. Ача тесе калăн, çĕтмахри пирвайхи çын тесе".

XIV-XVI ĕмĕрсенчи Çĕн чĕрĕлÿ варкăшĕ Эйзина тÿрремĕн мар – Раççейри XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи Ренессанс урлă витĕм кÿнĕ. "Шалти пурнăçпа пурăнакан çын çуралнăччĕ ун чухне, – çырнă Николай Бердяев 1935 çулта. – Перспектива улшăннăччĕ. Куçсем уçăлнăччĕ. Ытти тĕнчесене курма пуçланăччĕ. Ку тĕнче ыйтăвĕсем мар – вилĕмсĕрлĕх шухăшлаттарнăччĕ канăçсăр чунсене. Литературăпа искусство хăйсен чиккисенчен тухас туртăмлăччĕ, вĕсене тĕн тата мистика сăнĕ çапнăччĕ".



**• Акаçă.**

П.Эйзинпа калаçнинчен: "Пастернакăн йĕрке хыçĕнче тăракан чунĕ пур. Чунне кăткăслăх хыçне пытарсан та вулакан патне çитерет. Тунсăхĕ, хурланăвĕ, музыки калама çук сисĕнет. "Ветер" ятлă сăвă пур. Ку сăвăпа пурăнмалла, тĕн тумалла унран. Поэзипе те тĕн пек пурăнмалла". Марина Цветаева "Световой ливень" тĕрленчĕкре: "Пастернак – ача мар, тĕнче унра – ача. Вăл Адамран маларах çуралнă. Унра утрав çинчи, ача чухнехи, çĕтмаха этем ури пусичченхи... Унра çак уçăмсăрлăх, сăмахпа калама çукки".

Пайрăм тĕлĕшĕнчен те Пастернак Леонардо да Винчие çывăх. "Давай ронять слова" йĕркепе пуçланакан ятсăр сăвă пайрăмсен пĕлтерĕшĕ пирки: "Пурне те пултаракан турă. Пайрăмсен турри. Юрату турри. Вилнĕ хыççăн пурнăç пур-и? Çук-и? Ăна пĕлместĕп. Анчах та пурнăç, кĕрхи шăплăх пекех, пайрăмсенчен тăнине пĕлетĕп". Пастернакăн "Несколько положений" ĕçĕ те Çĕн чĕрĕлÿн сăнавлăх хавалĕпе тулнă. "Хальхи юхăмсем ÿнере фонтан тесе шухăшлаççĕ. Çук, ÿнер вăл – губка. Ÿнерĕн тапса тăмалла", – теççĕ вĕсем. Çук, ÿнерĕн çăтмалла та çăтмалла. Вĕсен шухăшĕпе – ÿнере сăнарлăх мелĕсем çине уйăрма пулать. Çук, вăл туйăмлăх хатĕрĕсенчен хывăнать. Ÿнерĕн ялан куракан пулмалла. Унăн тĕрĕс те туллин курма тăрăшмалла.

Кĕнекери сценăсем - инсценировкăсем. Çапла шухăшлатчĕç. Ку вăл - йăнăш. Мĕн тума кирлĕ вĕсем кĕнекене? Пирĕнте янракан пурнăç сассине пăсмалла мар, улăштармалла мар. Акă пирĕн тивĕç. Чăнлăха тупса калама пултарайманни – çитменлĕх. Тĕрĕс марлăха ăста калама пĕлнипе ăна хуплаймăн. Кĕнеке – чĕрĕ ярала. Вăл ăсран тайăлман, йăлтах ас тăвать: ÿкерчĕкпе сценăсене вăл иртнĕ пурнăçран илсе килнĕ, вĕсене ас туса юлнă та манасшăн мар.

П.Эйзинпа калаçнинчен: "Эпĕ сăвă çырнă чухне çапла çырма тăрăшатăп. Шалти куçпа пăхас пулсан кино пек курмалла, ÿкерчĕк пек тухса тăмалла. Тата шăп çав пайрăм тухса тăмалла. Пĕтĕмĕшле ÿкерчĕк кайран тухса тăмалла. Маншăн сăмахпа çырса ÿкерчĕк тăвасси пĕлтерĕшлĕ. Вулакансене шалти куçпа курăнса кайма пултартăрччĕ".

**Юрий ЯКОВЛЕВ.**

Анатолий МИТТОВ ÿкерчĕкĕ

# Каçăрăлчăк автан

Пирĕн автан пусă тăррине хăпарса ларса каçăрăлса юрлама юрататъ. Ку-ка-ре-ку!.. Ку-ка-ре-ку!.. Курăр мана, эпĕ чи паттăрри, курăр мана, эпĕ – чи çÿлти, курăр мана, эпĕ – чи илемли, чи янăравли, чи паттăрри!...

Каçса кайсах авăтнăран пĕррехинче пусă тăрринче лараканскер тытăнса тăраймарĕ, месерле пеçĕ анчĕ! Пусă анинче лаpакан пушă шыв витринчен çакланса юлма хăтланасшăн пулчĕ, çакланаймарĕ курăнать – асар-писер çуйхашса, кăтиклесе, тĕкне-çÿçне вĕçтерсе, витри-сăнчăрĕпех пусса сирпĕнсе анса кайрĕ... Эх, çуйхашать, эх, янрашать хайхи автан пусă тĕпĕнче... Сивĕ шывра ишсе çÿресси килĕшсех каймасть пулмалла. Хайхискер, сăнчăртан çакланса çÿлелле хăпарма шут тытрĕ, анчах каллех персе анчĕ. Ĕнтĕ йывăç пус пурин кĕтессинчен çакланса тăма та хăтланса пăхрĕ, анчах хевте çитереймерĕ – каллех сивĕ шыва пуç хĕрлĕ чăмрĕ.

Эх, каллех пуçларĕ вара çухăрашма, çунаттипе çапкалашма... Хăй пур пĕрех авăтасшăн-ха – çатăлтатма пăрахмасть. Сасси вара аран хăрăлтатса тухакан пулчĕ.

Шăп çав вăхăтра кил хуçисем кăнтăр апатне таврăнчĕç. Пусă тĕпĕнче автан çуйхашнине илтсе тÿрех унта чупса пычĕç. Витюк сăнчăрти витре ăшне ларса пусса анса кайрĕ. Хайхи аптрашки автана ярса тытрĕ те çÿлтисене пусă шетĕрнекне çавăрма хушрĕ. Пурте пĕрле шетĕрнеке вăйпа çавăрса Витюкпа автана пусăран чип-чиперех кăларса çитернĕпе пĕрехчĕ ĕнтĕ... Сасартăк сăнчăр çак йывăрăша чăтаймарĕ – татăлчĕ кайрĕ!..

Сăнчăрĕ, Витюкĕ, автанĕ йăлт пусса чăмрĕç. Кашни хăй тĕллĕн ятлаçса анса кайрĕ пусă тĕпне - сăнчăрĕ шăлтăр-шалтăр турĕ, автанĕ ку-ка-ре-ку! Витюкĕ те чăмăрккине тăратсах çуйхашрĕ.

Пурте сивĕ шыва тепĕр хут чăмрĕç. Мĕн тумалла ĕнтĕ?

Çÿлте пăхса тăракансем маларах тăна кĕчĕç. Ашшĕ аслăк тăрринчен вăрăм пакур йăтса килчĕ те,

– Эй, эсир унта, пусă тĕпĕнче, асăрханăр-ха, пуçăрсене пĕкĕр! – çапла каласа ашшĕ пакурпа витрене çаклатрĕ. Витюк вара пакур тавра сăнчăра яваларĕ те хăй те унран çакланчĕ, автанне хул хушшине хĕстерчĕ. çапла вара вĕсене çÿлтен хуллен, асăрханса туртса кăларчĕç.

Автан сарай тăррине хĕвел ăшшине хăпарса ларчĕ те кунĕпех сас памарĕ. Автаншăн хур курнă Витюк çырмари çуллахи ăшă шыва чăмрĕ, киленичен ишсе ярăнчĕ.

Ашшĕ пусă сăнчăрне шетĕрнек çумне пăтапа çапса хучĕ, шыв витрине хытарчĕ. Хăй тĕллĕн вара тектехех мăйăх айĕн кулкаларĕ: хăшне-пĕрне ăс кĕчĕ пулинех-ха паян – каппайчăк автана та, шухăшламасăр сăмсине пур çĕре те чикекен ывăлне те.

**Людмила САЧКОВА**

# Елчĕксем Культура çулталăкне уçрĕç

***Елчĕксем Культура çулталăкне ыттисем пек район центрĕнче мар, ялти – Патреккелти – информаципе культура центрĕнче уçрĕç. Уява культура ĕçченĕсем, библиотекарьсем, тавра пĕлÿçĕсем, ветерансем, хăнасем хутшăнчĕç. Вĕсен хушшинче – Елчĕк район администрацийĕн пуçлăхĕ Николай Миллин, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем.***

Культура çурчĕн фойинче тĕрлĕ курав ĕçлерĕ. Ял тăрăхĕсен хушшинчи тĕп библиотека «Елчĕксем литература тĕпелĕнче» кĕнеке куравĕ, районти клуб ĕçченĕсем ал ĕç ăстисен хатĕрĕсен экспозицийĕсене хатĕрленĕ. Борис Пятаковăн халăх музыка инструменчĕсен коллекцийĕ тата Петр Теренинăн йывăçран касса эрешленĕ ĕçĕсем халăха уйрăмах кăсăклантарчĕç.

Чăваш хресченĕсен ĕмĕртен килекен юррипе – «Алран кайми аки-сухипе» – уçрĕç мероприятие. Николай Миллин культура тытăмĕнче палăрнисене Хисеп хучĕпе, Тав çырăвĕпе чысларĕ, Елчĕкри ачасен искусство шкулне чăваш тумĕн комплектне парнелерĕ.

Уява районти пултарулăх коллективĕсен концерчĕ малалла тăсрĕ.

**Надежда СМИРНОВА**

• ➡ 12 стр.

КУЛЬТУРА

# Илем уççине тупма пулăшрĕ









• И.Клочков ӳкерчĕкĕсем.

Шупашкара куçса килни виçĕ çул çеç-ха, çапах та эпĕ тĕлĕнмелле пултарулăх çынпа паллашрăм. Вăл манран аслă пулин те тепĕр çамрăкран иртерни куç кĕретех. Çамрăксемпе те, шкул ачисемпе те, вĕрентекенсемпе те пĕр чĕлхе тупаять. Хăй пуçланă ĕçне тĕплĕ пурнăçласа вĕçне çитерет. Пахалăхĕпе пурне те савăнтарать. Вулаканăн кăсăклăх çуралчĕ пулмалла. Кам-ха вăл? Илья Степанович Клочков, чăвашсен паллă фотохудожникĕ.

Пĕр 6-7 çул каялла эпĕ «Халăх шкулĕ» журнал вĕрентекенсен хушшинче иртернĕ «Ырăлăх педагогики» фотоконкурса темиçе ĕç ярса панăччĕ. Ун чухне Илья Степановичпа паллашманччĕ-ха.

Хулана куçса килсен Чăваш наци конгресĕн çуртĕнче тĕп хуламăрти чăваш чĕлхи вĕрентекенĕсене «çавра сĕтеле» пуханăччĕ. Тăван чĕлхе хисепĕшĕн, ӳсĕмĕшĕн тăрăшакансем тĕрлĕ ыйту сӳтсе яврĕç. Илья Степанович та чăвашлăхшăн çунни курăнчĕ. Вăл панă сĕнӳ пурне те килĕшрĕ. Эпĕ те çакăн пек хĕрӳллĕ çынпа çывăхрах паллашас терĕм. Сăмах май сăн ӳкерчĕк конкурсĕ çинчен те аса илтĕмĕр.

Мăшăрăм аслă хĕре, Ленăна, фотоаппарат парнеленĕччĕ. Анлă тавра курăмлă хĕр ача кашни самантăн илемне ӳкерчĕ, çак ырă йăлапа эпĕ те çывăхлантăм. Качака путеккисем тринк-тринк! сикни те, лĕпĕш канма ларни те, чечек лаптăкĕ те, арпус-дыня пиçни те асра юлтăр тесе ӳкерме пуçларăм. Ман ĕçсемпе паллашсан Илья Степанович хаçатсемпе те туслă пулмалла сан терĕ. Часах вĕсем «Тантăш», «Хыпар», «Чăваш тĕнчи» хаçатсенче пичетленчĕç. Пĕрремĕш утăмсене тума Илья Степанович пулăшрĕ. Вĕренӳ институтĕнче ятарласа курав иртерме хутшăнчĕ. Ăсти мĕнле – ĕçĕ çапла тенĕ ватăсем. И.С.Клочков хатĕрленĕ «Чăваш Енри шкулсемпе вĕренӳ учрежденийĕнче фото тата видеопултарулăха аталантарасси» программа вăя кĕчĕ. Ăна вăл тĕп хулари ачасене хушма пĕлӳ паракан ЮНИТЭКС центрпа, шкулсенчи вĕрентекенсемпе тата тĕрлĕ редакципе йĕркелет.

Алăра – Илья Степанович ятарласа хатĕрленĕ пысăк та илĕртӳллĕ «Конкурссем» альбом. Унта фото ăста пухнă статьясем, репортажсем... «Шкул ачи, хăвна кăтартсам!», «Чечеклен, Чăваш Ен!», «Тăван енĕм, савнă ен», «Тăван ялăм, савнă ялăм», «Вĕрентекен, хăвна кăтарт!», «Ырăлăх педагогики» фотоконкурссене йĕркелесе аталантаракан, малашлăхра илем тĕнчипе пурăнакан Илья Степанович ĕçĕсем...

Сăн ӳкерчĕкпе пурнăçра усă курасси ӳссе пырать. Паян, сăмахран, эпĕ хатĕрленĕ çĕнĕ хыпарсемпе сăн ӳкерчĕксем шкул сайтне пуянлатаççĕ, вĕренекенсен пурнăçне анлăн кăтартаççĕ. Тавах сире, Илья Степанович, тĕнче илемĕн уççине тупса панишĕн!

■ **Любовь КУДРЯВЦЕВА,**
**Шупашкарти 19-мĕш шкулăн чăваш чĕлхи вĕрентекенĕ**

---

*Эсир ыйтнăччĕ*

# Хут купăс

**Сăвви те, кĕвви те Николай КАРЛИНĂН**



Çамрăксем алла-аллăн утаççĕ,
Укăлча умĕнчи улăхпа.
Вăйăра выляса савăнаççĕ,
Авалтан пыракан йăлапа.

*Хушса юрламалли:*
Ман хут купăс сасси –
Эп сана каласси.
Итлесемччĕ, савни,
Итлесем.
Купăса тăнласа,
Юррăма ăнланса
Укăлча умне кĕçĕр
Килсем.

Пăла тăрăх таçта саланаççĕ,
Пĕр салху, пĕр хавас юрăсем.
Пĕр сана çеç кĕтсе тунсăхлаççĕ
Халь хут купăс калан кĕвĕсем.

*Хушса юрламалли.*

Çуллахи каç иртни сисĕнмерĕ,
Шурăмпуç сапалать çутине.
Тăлăх купăс кĕтсе илеймерĕ
Йăлăнтармăштарах савнине...

*Хушса юрламалли.*

Хĕр чунне йăлăнса çавăрмаççĕ,
Юратмастăн пулсассăн – каçар.
Ман хут купăсшăн çĕр
çывăрмаççĕ
Таврари пикесем сахал мар.

*Хушса юрламалли.*

## Лаша çулĕ – асра пулĕ

Пурăнăç кӳрсен такан,
Эс ялан телей тупан.

* * *

Çул çинче выртсан такан
Куç хывать ăна такам.

* * *

Сулнăкра çапсан çуна
Манса ан кай хуçуна!..

* * *

Сăрт хĕрри мар – ту айкки,
Ик айкки те тăвайкки.

* * *

Чĕпĕтет-çке Хĕл Мучи,
Ăшши пур-ши ун мунчин?

* * *

Юр кайсассăн та ан ман:
Хушăран тухать тăман...

* * *

Кăпăшка çеç юр ӳкет.
– Çĕнĕ çул! – тесе вĕçет.

## Истори ишĕлчĕкĕсем

– Çĕр-шыва çиет коррупци! –
Тенĕ тахçанах Софокл.
Кирлĕ мар ун чух Конфуций,
Татса парĕ йăлт Дамокл...

* * *

Тĕттĕм каçлă пӳлĕмре
Хуп-хура кушак...
Йăлт пăтранчăк кӳлĕре
Пулă çук – атма пушах.

* * *

Достоевский: «Çăлĕ, – тенĕ, –
Тĕнчене илем!
Шур çиппе иккен çĕленĕ
Чăнлăха – пĕлен...

### Микул ПУЛАР

* * *

– Платон вăл – ман юлташ, –
Сократ çапла каланă.
Апла тăк ан тавлаш:
– Эп чăнлăха хакланă...

* * *

Хăй лашине Калигула,
Сената кĕртсен
Герострат – кула-кула,
Янă храм чĕртсе...

* * *

Сизиф кунран-кун
Тапаçланнă:
Хĕвел ир тухнă та
Каç аннă...

* * *

Ку сăмаха эп илтрĕм такамран та:
– Эс халь те шăрçалан-и
сăвăсем?
Вулаканран, тусран, ахаль
çынран та...
Вĕсем чуна вырнаçнă сăвăссем!

Тĕлĕнмелле, хăш чух «чăваш»
текенĕ
Тăван иртсе кайсан та кĕвĕçет.
Ура хурать те – чунĕ хĕпĕртенĕ,
Хăй пурлăхне вара кĕве çиет...

Сăнран та вĕсене пĕлетĕп лайăх:
«Пулас» прозаик, сăвăç, драматург...
Хăй еврĕлĕ кĕтрет вăл –
пултарулăх,–
Çӳлтен паман тăк – ним тума та
çук...

Çакна çеç ăнланмастăп –
мĕн çитмест-ши,
Ун еврĕ çынсене кĕве çимест-ши?

Надежда СМИРНОВА хатĕрленĕ. • Çырăр: Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13, «Хыпар». • Шăнкăравлăр: Тел. /8352/ 56-08-61.

# МĔН ÇЫРАÇÇĔ ХАÇАТСЕМ

*Чыс-хисеп çĕнсе илнисем*

## Аркадий Гайдар: «Çынсене усă кӳрекен ĕç ту»



***Аркадий Петрович Гайдар /Голиков/ – «Военная тайна», «Голубая чашка», «Чук и Гек» хайлавсен авторĕ. Амăшĕ енчен вăл Лермонтовăн тăванĕ пулнă. Çĕр-шыври ача-пăча валли çыракансенчен чи лайăххи. Ăна пурте хисепленĕ, юратнă. Ун пеккисем пирĕн çĕр-шывра виççĕн пулнă. Çитĕннисемшĕн – Максим Горький. Комсомолецсемшĕн – Николай Островский. Пионерсемшĕн – Аркадий Гайдар.***

### Эсĕ пĕччен юлатăн

1899 çулта семинарирен вĕренсе тухсан çыравçă ашшĕ Петр Голиков Льгов хулине сахăр завочĕ çумĕнчи пуçламăш пĕлӳ паракан училищĕне таврăнать, вĕрентекен пулса тăрать. Унпа пĕрле – мăшăрĕ Наталья Аркадьевна /хĕр чухнехи хушамачĕ Салькова/.

Хĕрне крепостла хресченсен тăхăмĕпе Петр Голиковпа пĕрлешме Аркадий Сальков поручик пил паман. Анчах та Наталья Аркадьевна ашшĕ-амăшĕн пилĕсĕрех венчете тăнă. 1904 çулта мăшăрăн пĕрремĕш ачи çуралсан Голиковсем ăна кукашшĕне хисеплесе Аркадий ят панă. Анчах та штабс-капитан хăйĕн сăмахне итлемен хĕрне каçарман.

Сахăр завочĕн поселокĕнче Голиковсем 8 çул пурăннă. Çакăнтах Аркадин йăмăкĕсем Наташăпа Ольга çуралнă. Пуянлăх пулман, çапах та туслă пурăннă. П.Голикова Чул хула акциз управленийĕн ведомствине службăна йышăннă. Тепĕр çулхинех çемье Чул хулана пурăнма куçнă. Кĕçĕн хĕрĕ Катя çуралнă.

1914 çулхи кĕркунне Аркадий Арзамасри реальнăй училищĕне вĕренме кĕнĕ. Тĕнче I вăрçи пынă. Петр Голиков унта тухса кайнă. Наталья Аркадьевна 4 ачапа тăрса юлнă, больницăра ĕçленĕ. Унта аманнă салтаксене илсе килме пуçланă.

Аркадий вĕренӳре тăрăшсах кайман. Чăн та, литературăпа час-часах «5» паллăсем илнĕ. Ашшĕшĕн тунсăхланă, ун патне фронта тарма хăтланнă. Февральти революци хыççăн П.Голиков прапорщика 11-мĕш Çĕпĕр полкĕн салтакĕсем комиссара суйланă, ун хыççăн вăл полк командирĕ, каярах дивизи штабĕн комиссарĕ пулса тăнă.

### Полк командирĕ

1918 çулхи раштав уйăхĕнче çамрăк Аркадий Голиков Хĕрлĕ Çара каять. 1919 çулта Киевра команда курсĕнчен вĕренсе тухнă, 15 çулта рота командирĕ пулса тăнă. 16 çулта чухне полк шанса параççĕ. Пулас çыравçă полкĕнче 4000 çын шутланнă. Голиков çавнашкал яваплăхран хăраса ӳкнĕ, пĕчĕкрех должноçа куçарма ыйтнă. Часах çар районĕн пуçлăхне суйланă. Ăна 6000 çын пăхăнса тăнă. 1919 çулхи раштав уйăхĕнче снаряд сирпĕннĕ вăхăтра Голиковăн контузи пулнă, ури аманнă.

Каярах Гайдар çинчен Антонов пăлхавне путарнă чухне, çавăн пекех Хакасире Иван Соловьев бандипе кĕрешнĕ вăхăтра хаярлăх кăтартнă тесе сас-хура сарнă. Унăн хушăвĕпе çĕр-çĕр çынна тĕп тунă имĕш.

Борис Камов публицист Аркадий Петровича айăпласа элек сарнине çирĕплетет. Çитменнине тата Тамбов тăрăхĕнче Голиков Тухачевский командующи патне пырса пăлхавçăсене явап тыттармалли условисене çемçетме чĕнсе каланă. Кăштах вăхăтран Аркадий Голиков штабĕ вырнаçнă тĕле 6000 пăлхавçă пырса хĕç-пăшалне хунă. Çакна документсем çирĕплетеççĕ. Гайдарăн «юнлă идеологи» нихăçан та пулман. Фронтран вăл тăванĕсене ăшă кăмăллă çырусем янă.

Маларахри контузие пула Голикова 1924 çулта, 20-ре чухне, саппаса янă.

### Хушма ят вăрттăнлăхĕ

Аркадий Перме 1925 çулта Октябрьти революци уявĕ умĕн пынă. Темиçе кунран «Звезда» журналăн уяв номерĕнче унăн «Угловой дом» калавĕ кун çути курнă. Гайдар тесе алă пуснă.

Литературăри ячĕн историйĕ – А.Гайдарăн çыравçă биографийĕнчи чи кăсăклă страницăсенчен пĕри. Анлă сарăлнă икĕ версие аса илер. Пĕрремĕшĕ: ку сăмах «малта пыракан юлан утçă» тенине пĕлтерет. Иккĕмĕшĕнчен, Гайдар – аббревиатура: Голиков Аркадий из Арзамаса. Çыравçă хăй кун пирки нимĕн те каламан.

Гайдарăн пĕрремĕш кĕнекисене асăрхаман та темелле. 1926 çулта «Р.В.С» калав çырнă, 1930 çулта «Школа» кĕнеки тухнă. Аркадий Гайдар ача-пăча паллă çыравçи пулса тăнă. Гайдара ĕненнĕ, вăл чун-чĕререн çырнă. Мĕн пур вăхăтра çынсем хăйсене пĕрешкел ыйтусем панă: мĕнле пурăнмалла, мĕн тумалла? Çыравçă кĕнекисемпе хуравланă: Раççее юрат, аллуна усса ан лар, çынсене усă кӳрекен ĕç ту.

### «Çапкаланчăк» çыравçă

Паллă çыравça тухнă пулин те пурнăçне çапкаланчăк пек ирттернĕ темелле. Хăйĕн кĕтесĕ те, çыру сĕтелĕ те пулман. Пултарулăх çурчĕсенче, «Артек» лагерьте ĕçлесе пурăннă, тăван тăрăхне Арзамаса кайнă, тусĕсем патĕнче вырăн тупнă, Кунцево поселокĕнче дача тара илнĕ. 1938 çулта çеç Писательсен союзĕ Аркадий Петровича коммуналлă хваттерте пӳлĕм уйăрса панă.

Вăл нумай пичетленнĕ, анчах та ун чухне тӳлевĕн регрессивлă тытăмĕ хуçаланнă – хайлав мĕн чухлĕ нумайрах тухать – гонорар çавăн чухлĕ пĕчĕкрех. Аркадий Петровичăн орден илмелле – мăшăрĕ Дора Матвеевна гимнастеркине çĕрĕпех унтан та кунтан çĕленĕ. Кремле тăхăнса кайма урăх тум та пулман.

Пермьре Гайдар «комсомол хастарне» Лия Лазаревна Соломянскаяна качча илнĕ. 1926 çулта Архангельскра вĕсен ывăлĕ Тимур /контр-адмирал тата паллă журналист/ çуралнă. Вĕсен час-часах уйрăм пурăнма тивнĕ, Гайдар корреспондент пулнă май çĕр-шыв тăрăх çӳренĕ. 1931 çулта арăмĕ унран уйрăлать, ывăлне те пĕрле илсе каять. Иккĕмĕш хут качча тухать, Гайдара хваттерсĕр хăварать.

1938 çулта Гайдар ырă кăмăллă та çепĕç Дора Чернышовăна качча илет.

### Юлашки çапăçу

1941 çул. Вăрçăн малтанхи икĕ эрнинче Гайдар «Клятва Тимура» киносценари çырнă, ун хыççăн радио валли – «Берись за оружие, комсомольское племя!» статья.

Утă уйăхĕнче Гайдар, «Комсомольская правда» хаçатăн çар корреспонденчĕ, фронта каять. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи çинчен çырнă очеркĕсем Гайдарăн маларахри хайлавĕсенчен уйрăлса тăнă.

Çĕнтерӳ савăнăçне вăл курайман. 1941 çулхи кĕркунне Гайдар тăшман тылĕнче партизансен отрядĕнче юлнă. Мускавран ăна отряда ятарласа янă самолетпа вĕçсе килме сĕннĕ, анчах вăл килĕшмен. 1941 çулхи юпа уйăхĕн 26-мĕшĕнче партизансен отрячĕ Лепляво ялĕ çывăхĕнче засадăна лекнĕ.

■ **Г.ФРОЛОВ.**

/«Моя семья»/



## Агафья Лыкова тĕнчене çыру янă

Вăрманта тăр пĕччен пурăнакан хĕрарăм «пысăк çĕр» çине çыру янă. 68 çулти Агафья Лыкова /вăл Хакасире пурăнать, çывăхри поселок 120 çухрăмра вырнаçнă/ сахал апат-çимĕç хатĕрлени, çанталăк питĕ сивĕ тăни пирки ӳпкелешет, хăйне пулăшакана яма ыйтать.

Шăпах Василий Михайлович Песков цивилизацирен 1938 çулта Саян тăрăхĕнчи тайгана тарнă, авалхи тĕне ĕненекен Лыковсен тĕлĕнмелле çемйи çинчен тĕнчене каласа кăтартнă. Агафья патне пуçласа вăл 1982 çулта пынă, çавăнтанпа Лыковсене манман. Час-часах çитсе килнĕ, яланах – парнесемпе, пылак çимĕçпе, эмелсемпе. Вăл Хакасири робинзонсем çинчен çырнă «Таежный тупик» документлă повеçе пурте кăсăкланса вуланă, тепĕр хут та пичетлесе кăларнă, темиçе чĕлхене куçарнă.

Паян тавлашу çуралнă: Агафья Лыковăна «пысăк çĕр» çине илсе каймалла мар-ши? Çапах та Василий Михайлович хăй Агафья тайга тулашĕнче пурăнаймасть тесе шухăшланă. Акă мĕнле çырнă вăл:

«Сăн ӳкерчĕксем тăвас ĕçĕмре тĕлĕнмелле тĕслĕх – тайгара авалхи тĕне ĕненекен Лыковсемпе тĕл пулни. Çак çемье историйĕ калама çук кăсăклăччĕ. Ăна тайгари робинзонсен сăн ӳкерчĕкĕсене курсан çеç ĕненме май пурччĕ. Анчах та Лыковсем ӳкерĕнме килĕшместчĕç – «çылăхлă ĕç!» Эпĕ йывăрлăха кĕрсе ӳкрĕм, вăрттăн, инçетрен ӳкерме хăтлантăм, анчах та вĕсем шанми пулчĕç. Тем пек ӳкĕтлени те пулăшмарĕ – «юрамасть!»

Вăхăт иртнĕçемĕн эпĕ сăн ӳкерчĕксене мĕншĕн йышăнманнине ăнлантăм. Авалхи тĕне ĕненекенсем /сектăсем/, вĕсене «чупкăнсем» тенĕ, «тĕнчепе» пурăнма «юрамасть», «тĕнчерен» тармалла, пытанмалла тесе шухăшланă. Алексей Михайлович патша вăхăтĕнченех вĕсем çапла пурăннă. «Чупкăнсем» сăн ӳкерчĕк çинчен XIX ĕмĕр вĕçĕнче пĕлнĕ. Çак ушкăна кĕрекенсем шухăшланă тăрăх – хăйсем пытанаççĕ, сăн ӳкерчĕк вĕсене шыраса тупать темелле, «тĕнче» пĕлме пуçлать. «Таса мар ĕçпе» аппаланас мар тенĕ: «Çылăхлă ĕç. Турă сăнне çеç пăхма юрать».

Çапла вара кашни çулах тайгана вĕçсе мĕн те пулин ӳкермешкĕн тĕрлĕ мел шыраттăм. Пӳрт-çуртне, хуçалăхри савăт-сапине, пахчине, апат-çимĕçне, хуралтисене – ӳкер, тархасшăн, сăнсене – «юрамасть». Камерăна курсанах Агафья тата ашшĕ Карп Осипович пĕр тăхтаса тăмасăр пӳртне кĕнĕ е курăк ăшне ӳкнĕ...

Лыковсен тайгари «усадьбине» кирек кам пырсан та пурте çак çынсене сăн ӳкерме тăрăшнă. Ашшĕ вилнĕ хыççăн эпĕ хĕрне ӳкĕте кĕртме пултартăм – ӳкерӳ «çылăхĕ» унăн пулмĕ, ку «çылăха» эпĕ хам çине илетĕп. Агафья ку шухăша йышăнчĕ – манăн «машинкăсенчен» хăрама пăрахрĕ.

Вăрттăн тунă ӳкерчĕксем çинче Агафья тĕрлĕрен пулса тухнă – е сăн-пичĕ пуринпе те кăмăллине палăртать, е пачах та кулмасть. Сăмси Лыковсенни пекех – пысăкрах, умĕнчен ӳкерме хăймастăп, «çакăн пек тăр-ха» тесе ыйтмастăн вĕт.

Тепĕр тесен, юлашки çулсенче тайга çынни сăн ӳкерсе илнипе çырлахрĕ. Шӳтлесе те кулкаласа эпĕ ăна пулă тытнă, качакине сунă, йыттипе вылянă самантсенче ӳкерсе илтĕм. Час-часах тата унăн вĕçевçĕсен, хăйĕн патне пынă çынсен хушшине тăма тиврĕ – пурин те тĕнчипе паллă çынпа ӳкерĕнес килетчĕ. Агафья çаксене веçех чăтрĕ, çапах та сăн ӳкерчĕксене илсе килме пĕрре те ыйтмарĕ.

Манăн архивра виç çĕр сăн ӳкерчĕк упранать. Хăшĕсем çинче Агафья паллă Мона Лиза /Джоконда/ евĕрлех».

■ **В.ПЕСКОВ.**

/«Комсомольская правда»/

***Номере калăпланă вăхăтра çакна пĕлтĕмĕр: Агафья Лыковăна çăлмашкăн вертолет вĕçме хатĕр. Унта апат-çимĕç пулĕ, тĕнчерен уйрăм пурăнакан çынна пулăшакан та пырĕ.***

*Пулăм*

# Вĕсен паттăрлăхĕпе мăнаçланатпăр

***1979 çулхи раштавăн 24-мĕшĕнче Кабул сывăхĕнчи Баграм аэродромра 105-мĕш гварди десант дивизийĕн самолечĕсемпе вертолечĕсем анса ларнă. Çав вăхăтрах Кушка урлă Совет Çарĕн чикĕ çывăхĕнчи стрелоксен 357-мĕш тата 66-мĕш дивизийĕсем Афганистан çĕрĕ çине кĕнĕ. 1980 çулхи нарăс уйăхĕ тĕлне пирĕн çарсен контингенчĕн йышĕ 50 пин салтакпа офицера çитнĕ. 1980 çулхи çĕртме-утă уйăхĕсенче кунта мотострелоксен 16-мĕшпе 54-мĕш дивизийĕсене куçарнă. Çак вăрçă 1979 çулхи раштавăн 25-мĕшĕнчен тытăнса 1989 çулхи нарăсăн 15-мĕшĕччен – вунă çула яхăн тăсăлнă.***



Кăçал хамăр çарсене сăртлăтуллă çĕр-шывран илсе тухнăранпа 25 çул çитнине паллă тăватпăр. 2011 çултанпа çак кунах çĕр-шыв тулашĕнче çар тивĕçне пурнăçланă Раççей çар çыннисене чыслатпăр. Уява РФ Президенчĕ 2010 çулхи чӳкĕн 29-мĕшĕнче алă пуснă «Раççей Çар Мухтавĕн кунĕсемпе паллă пулăмĕсем çинчен» хушăвĕпе килĕшӳллĕн палăртаççĕ. Çакă – Афганистан вăрçинчен тăван кĕтесе чĕрĕ-сывă таврăнайман Совет Çарĕн 14 пин салтакĕпе офицерне ялан асра тытнине пĕлтерекен пулăм.

Афганистанри çапăçусене Чăваш Енри 4,5 пин çар çынни хутшăннă. Вĕсенчен тăватташĕ хыпарсăр çухалнă, 115-шĕ цинк тупăкра таврăннă. Вилнисен хушшинче – Çĕрпӳ районĕнчи Шуртавăш ялĕнче çуралса ӳснĕ Николай Фомин прапорщик. Ырă кăмăллă, яланах савăк туйăмлă пулнă Николай Яковлевич ашшĕамăшĕпе, тăванĕсемпе сыв пуллашнă чухне çапла каланă: «Кĕтĕр. Çур çултан Галинăпа пĕрлех çитетпĕр. Туй кĕрлеттеретпĕр. Маншăн ан пăшăрханăр. Пурте аван пулĕ». Çук, шăпа пӳрмен ăна тăван яла таврăнса ача-пăча ӳстерме. Хăйсен взводĕн ушкăнне душмансен УНКИНЧЕН хăтарнă чухне вăл вилмеллех йывăр аманать.

Киле чĕрĕ-сывă таврăнасси кашни çар çыннин таса ĕмĕчĕ пулнă. Мĕншĕн тесен ывăлĕ-хĕрне ашшĕамăшĕ, тăванĕсемпе çывăх çыннисем чăтăмсăррăн кĕтнĕ. «Ывăлăм кĕтмен-сĕртен çитрĕ. Алăкра – вăл, Володя! Ун хыçĕнче – шинель тăхăннă тепĕр çичĕ салтак. Пӳртре тӳрех хĕсĕк пулчĕ. Савăнăç-тӳпе таран...» Хăйсен ывăлĕ Афганистанран таврăннине çапла çырса кăтартаççĕ Валентина Петровнăпа Василий Николаевич Николаевсем. Володьăн кăкăрĕ çинче – «Çапăçури паттăрлăхшăн», «Çар хĕсметĕнче палăрнăшăн» медальсем, ВЛКСМ Тĕп комитечĕн «Çарти паттăрлăх» Хисеп палли пулнă. В.Николаев çапăçури юлташĕсемпе килни ахальтен мар: 1987 çулхи авăн уйăхĕнче вĕсен тусĕ, Куславкка районĕнчи Кĕнер ялĕнчи Борис Мишин, çапăçура вилнĕ, ӳтне тăван ялĕнчи масарта пытарнă. Юлташĕсем ăна пуç тайма килнĕ.

Нарăсăн 15-мĕшĕнче, çĕр-шыв тулашĕнче çар тивĕçне пурнăçланă Раççей çар çыннисене чысламалли кун, тĕрлĕ тапхăрта 30 ытла юнлă хирĕç тăрура пулнă çар çыннисен умĕнче пуç таятпăр, вĕсен паттăрлăхĕпе мăнаçланатпăр.

**Мария БЕЛКОВА, Чăваш Республикин патшалăх хальхи истори архивĕн ĕçченĕ**

*Ас тăвăм*

# Сумлă ентеш ячĕпе



***Красноармейски районĕнчи Чатукасси ялĕнче пурăнакансем хăйсен мухтавлă ентешне асра тытаççĕ. Ку тăрăхра çуралса ӳснĕ Раççей халăх артисчĕн, СССР Патшалăх премийĕн лауреачĕн Филипп Лукин /1913-1994/ композиторăн Асăну каçне выранти тавра пĕлӳçĕсем, культура ĕçченĕсем, вĕрентекенсемпе журналистсем, ветерансем, Филипп Миронович тăванĕсем йышлăн пухăнчĕç.***

Тĕл пулăва Красноармейски район администрацийĕн пуçлăхĕ Андрей Шестаков, Чатукасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Геннадий Михайлов, «Сувар» тĕпчев фончĕн ертӳçи Владимир Алмантай тата ытти хăна хутшăнчĕ.

Çĕр-шывĕпех ырă ячĕ сарăлнă композиторăн 100 çулхи юбилейне иртнĕ çулла сумлăн паллă турĕç. Трак енри уява Шупашкартан тата Мари Республикинчен килнĕ артистсен ушкăнĕсем, ЧР культура министрĕ Вадим Ефимов, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ Николай Угаслов, ЧР Композиторсен пĕрлĕхĕн ертӳçи Николай Казаков, композиторăн Мускаври хĕрĕпе мăнукĕ килнĕччĕ. Паллă кун тĕлне юрă-кĕвĕ ăстин ялти музейне тĕпрен çĕнетсе хăтлăлатнă, экспозицисене пуянлатнă. Халăхран пухнă укçа-тенкĕпе Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче пуç хунă паттăрсен палăкне юсанă. Сăвапла çак ĕçе Шупашкарти «Сувар» фонд та хăйĕн тӳпине хывнă.

Асăну каçне пухăннисем композитора ăшшăн аса илчĕç. ЧАССР Аслă Канашĕн депутачĕ пулнă чухне тăван тăрăхĕшĕн нумай тăрăшнăшăн ентешĕсем Филипп Мироновича халĕ те тав тăваççĕ.

# Тăван кĕтес историне упрар

Архив докуменчĕсем тата Анатолий Валентинов тавра пĕлӳçĕ тĕпчевĕ тăрăх – Чатукасси /унччен – Бибарсово/ ялне никĕсленĕренпе кăçал 900 çул çитет. Çавна май выранти хастарсем авалхи Атăл-Кама Пăлхар çулĕн Муромпа, Чул хулапа, Владимирпа, Суздальпе тата Мускавпа çыхăнтаракан лаптăкне реконструкцилеме сĕнӳпе тухнă. Вăл хăй вăхăтĕнче «Хурăнлă çул» ятпа палăрса юлнă. Чатукасси тăрăхĕнче ун чухне çар подразделенийĕсем, вăтам ĕмĕрти патшалăхсен, каярахпа – Раççей империйĕн регионĕсен транспорт артерийĕн пĕлтерĕшлĕ пункчĕсем вырнаçнă.

Район администрацийĕн пуçлăхĕ Андрей Шестаков выранти тавра пĕлӳçĕсен ларăвĕнче Чăваш Республикин Культура министерствинчен районăн туризм схемипе маршручĕсене кĕртмелли истори пĕлтерĕшлĕ вырăнсене палăртма сĕнсе çыру çитнине пĕлтерчĕ.

**Тимĕр АКТАШ**

## Ачана та явăçтарнă

***Хăй наркотикпе туслă пулни çитмен, усал ĕçе ачана та хутшăнтарнă. Çавна май Шупашкарти фирмăсенчен пĕрин 30 çулти генеральнăй директорĕн халь Уголовлă кодексăн 228 статйипе кăна мар, 150-мĕшпе те (çул çитменскере йывăр преступлени тума явăçтарни) айап тытма тивет.***

Следстви комитечĕн Шупашкарти пайĕ тĕпчесе пĕлнĕ тăрăх – 30 çулти бизнесмен тĕп хулари каçхи шкулсенчен пĕрин 17-ри вĕренекенне хăйне «спайс» туянма пулăшнăшăн укçан хавхалантарма шантарнă. Телефон номерĕ çине куçарма укçа панă. Наркотик сутакансем чее: номер çине укçа куçарсан СМС-пĕлтерӳ килет – наркотике илмелли вăрттăн вырăн ăçтине калаççĕ. Ку тĕслĕхре те çапла пулнă. Пĕлтерӳ илнĕ хыççăн фирма директорĕ хăйхи çамрăкпа пĕрле палăртнă адреспа машинăпа кайнă, наркотике илнĕ. Каялла таврăннă чух вĕсене право хуралĕн органĕсен сотрудникĕсем тытса чарнă.

Уголовлă ĕçе тишкерме Калинин районĕн судне панă ĕнтĕ.

**К.НИКОЛАЕВ.**

## Полицейские тапăннă

***Суд-психиатри экспертизи психика тĕлĕшĕнчен чирлине çирĕплетнĕ те – Шупашкар районĕн сучĕн йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн çак арçынна ятарлă стационарта сиплĕç. Ăна пула вара полицейскин те медиксенчен пулăшу ыйтма тивнĕ.***

Пăтăрмах пĕлтĕрхи юпа уйăхĕн 2-мĕшĕнче каçхине пулнă. Шалти ĕçсен пайне Çĕньял çынни хăйĕн арăмне вĕлерессипе хăратни пирки хыпар çитнĕ. Унта участковăй кайнă, хайхи хĕрарăмпа подъезд патĕнче тĕл пулнă. Вăл ăнлантарнă тăрăх – мăшăрĕ хăй мĕн хăтланнине те пĕлмест. Хĕрарăм хваттер алăкне уçнă кăна – полицейски еннелле икĕ çĕçĕ тытнă арçын ярса пуснă. Пакунлăскер урайĕнче выртакан çатмана илсе хăйхискере аллинчен çапсан, çĕçĕсенчен пĕри тухса ӳкнĕ. Анчах тепĕр çĕçĕ пур – унпа йĕркелĕх хуралçине уринчен чикме тăнă. Участковăй çĕççе аллипе тытса ĕлкĕрнĕ – касакан енченех...

Урмăшнăскере сиенсĕрлетнĕ. Анчах полицейски те аманнă. Телее, суранĕ йывăр мар. Йĕркеллĕ психикăллă пулнă тăк арçын чылай çуллăха тĕрмене кайса ларатчĕ ĕнтĕ, хальта вара – сиплев учрежденине кăна. Тепĕр тесен – йĕркеллĕ психикăллăскер пакунлă çынна çапла тапăнасси те иккĕленӳллĕ.

**Н.ДМИТРИЕВ.**

# Сăмах каçмăш

**Н.Краснов /Йĕпреç районĕ/ хатĕрленĕ**



1. Çын ячĕллĕ пулă. 2. Виçе. 3. Архитектура пайĕ. 4. Тĕлĕнтермĕш. 5. Чăваш кӳрши. 6. АПШ аркатнă патшалăх. 7. Пĕчĕк вăрман. 8. Ĕлĕкхи хĕç-пăшал. 9. Молекула. 10. Çурçĕрти хула. 11. Унта теннисла выляççĕ. 12. Пуччини опери. 13. Республикăри районăн авалхи ячĕ. 14. Кавказри юхан шыв. 15. Типсе пыракан тинĕс. 16. Кăçалхи çул палли. 17. Кутăн чĕр чун. 18. Ăна ООН ирттерет. 19. Чиркӳллĕ ял. 20. Сайгак, джейран, ... . 21. Пӳртхуралтă пайĕ. 22. Вăрнар районĕнчи ял. 23. Сыр вăрри. 24. Шупашкар районĕнчи ял. 25. Ухмахла вылямалли хатĕр. 26. Тимĕр вĕрен. 27. Çĕпĕрти республика. 28. Авалхи грексен турри. 29. Ахаль çӳрекене ... памаççĕ /ват. сăм./. 30. Çывăх тăван. 31. Укçа патне вăл та урине тăснă теççĕ. 32. Авалхи грексен юрату турри. 33. Унран аслă пулма хушман. 34. Çар техники. 35. Тинĕсри чĕр чун. 36. Хими элеменчĕ. 37. Дедал ывăлĕ. 38. Таçта кайма та кăмăллакан. 39. Франци юрăçи, хĕрарăм. 40. Çут çанталăка сăнакан.

**Сăмах каçмăш хуравĕсем:**

1. Карп. 2. Пăтавкка. 3. Арка. 4. Асам. 5. Мари. 6. Ирак. 7. Ката. 8. Аркебуза. 9. Атом. 10. Мурманск. 11. Корт. 12. «Турандот». 13. Трак. 14. Кура. 15. Арал. 16. Лаша. 17. Ашак. 18. Конгресс. 19. Сала. 20. Антилопа. 21. Алăк. 22. Кушлавăш. 23. Шăши. 24. Ишек. 25. Карт. 26. Трос. 27. Саха. 28. Артемида. 29. Ахах. 30. Хурăнташ. 31. Шапа. 32. Афродита. 33. Апат. 34. Танк. 35. Краб. 36. Бари. 37. Икар. 38. Романтик. 39. Каас. 40. Синоптик.

— *Ыйту-хурав* —

# Пысăк стажлисене хавхалантараççĕ

**Тивĕçлĕ кану ӳсĕмне çитсен пенсие тухмасăр малалла ĕçлекенсене патшалăх хавхалантарать теççĕ. Тĕрĕс-и çакă? Эпĕ сакăр çул сусăр ачана пăхрăм. Çав тапхăр стажран тухса ӳкет-и?**

**Ю.АВИНА.**

РФ ĕç тата социаллă хӳтлĕх министрĕ Максим Топилин пĕлтернĕ тăрăх – РФ Патшалăх Думине сӳтсе явма тăратнă çĕнĕ йĕркепе стаж нумаййисен пенси виçи пысăкрах пулать. Пĕлтерĕшли – çыннăн официаллă майпа ĕçлемелле тата ĕçпе тивĕçтерекенĕн Раççей Пенси фондне сирĕншĕн вăхăтра взнос хывса тăмалла.

Ĕç министерстви çавăн пекех пенсие тухассине хăй ирĕкĕпе каярах вăхăта хăваракана та хавхалантарма сĕнет. Тĕслĕхрен, çав тапхăра палăртнă ӳсĕмринчен 5 çула тăссан 45 процент ытларах илме тытăнать.

Пенсин çĕнĕ формули граждансем çар е унпа танлаштарнă служба, ĕççĕр статусне илнĕ, декретра пулнă, пĕрремĕш ушкăн инвалидне, сусăр ачана е 80 çултан иртнĕ ватă çынна пăхнă, чир-чĕре е сурана пула ĕçлес пултарулăха çухатнă тапхăрсене те шута илет.

# Çăмăллăхсемсĕр хăварма пултараççĕ-и?

**Ватлăхри ĕç пенсине йĕркелерĕм. Халĕ вара ĕç тупрăм, кăштах вăй хурас тетĕп. Кун пек чухне пенсие тулли виçепех тӳлеççĕ-и тата пенсионера паракан çăмăллăхсем сыхланса юлаççĕ-и?**

**С.ПАРНИКОВ.**

РФ Пенси фончĕн правленийĕн председателĕн пĕрремĕш çумĕ Лилия Чижик ăнлантарнă тăрăх – Пенси фончĕ урлă килекен тӳлевсем çын ĕçлеме тытăнсан та сыхланса юлаççĕ. Кунсăр пуçне унăн пенсийĕ корректировка тунипе çуллен индексациленет – ун чухне ĕçпе тивĕçтерекен малтанхи çул гражданиншăн хывнă взнос суммине тĕпе хураççĕ.

Пенси çумне хушса паракан социаллă тӳлеве вара ĕçлемен пенсионерсем кăна тивĕçеççĕ. Ăна ватă çын тĕпленнĕ регионта пенсионера пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк виçерен сахалрах тупăшлă /çав шута пенси, социаллă тӳлев тата ытти те кĕрет/ çынсене параççĕ. Халĕччен çав хушма суммăна илсе тăнă тăк ĕçе вырнаççан унăн ирĕкне çухататăр.

Сăмах май, 2014 çулта ĕç пенсийĕсен нарăс уйăхĕн 1-мĕшĕнче – 6, ака уйăхĕн 1-мĕшĕнче 2 процент ӳстерме палăртнă.

## РАБОТА

**97.Требуются рабочие** на монолит. Вахта. Оплата своевременная. Т. 8-917-677-42-98.

**100.Требуются монолитчики.** Т. 8-927-667-82-72.

**110.Монолитчики,** плотники, **монтажники,** шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда. Вахта. Т. 8-925-002-22-38.

Факс: /8352/ 28-83-70.
E-mail:hypar2008@rambler.ru
реклама пĕлтерӳ
Тел.: 28-83-70.
316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ.

## ПРОДАЮ

**1.Качественную** фабричную **МЕБЕЛЬ** по доступным ценам: стенки от 7900 р., прихожие от 3600 р., шкафы от 3300 р., комоды от 2300 р., столы от 1000 р., кровати от 4000 р. **Доставка,** сборка. Скидки, рассрочка. Салоны «Express Комфорт»: м-н «Экспресс»; вещ. рынок «Ярмарка»; МТВ-Центр – 4-й эт.; «Северная» ярмарка. **Сайт:** www.excomfort.ru. Т.: 46-55-44, 89538998224.

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Доставка. Замер. Без выходных. **Т. 89875766562.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х-20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого; **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**7. СРУБЫ** для бани. Т. 37-28-74.

**8.Гравмассу, песок,** щебень, **торф,** кирп. бой, **керамблок,** керамзит. Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил, гвозди,** столбы, проволоку. **Изготовление** ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**12.Профнастил,** металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, **трубы** профильные, водостоки, металлосайдинг. Т. 444433.

**15.Кирпич,** брусчатку, кольца, ОПГС, песок, КБ. **Т. 89613393363.**

**16.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производителя – чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов, **сетку сварную,** столбы, скобы, проволоку, калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 8-937-952-22-11.

**19.Гравмассу, песок, щебень,** торф, кирп. бой. Т. 89033225766.

**20.Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Найдёте дешевле – уступим. Без вых. Т. 89625989686.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

**22.ОКНА** пластиковые, железные **ДВЕРИ**. Реально низкие цены. Гарантия. Т. 89871267170.

**23.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

**24.ГРАБЛИ,** косилки, **сажалки,** копалки, окучники, **опрыскиватели.** Доставка. Т. 89278533596.

**26.Керамблоки** 20х20х40, 12х20х40, 10х20х40, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, к/кольца. Доставка. Т. 89033468556.

**33.Гравмассу,** песок, **керамзит, щебень, торф.** Недорого. Доставка. Т. 89053465671.

**35.Блоки керамзитобетонные** вибропрессованные, пропаренные. Дёшево. **Т. 89373866629.**

**38.ПЛИТЫ тротуарные** 400х400х50 – 420 руб./кв.м., 500х500х60 – 450 руб./кв.м. **Зимой дешевле.** Т. 89674702736.

**42.Керамблоки** 12х20х40, 20х20х40, **кольца** колодезные – диам. 1,5м; 1м; 0,8м; 0,7м; 0,45м. Доставка. **Бурение.** Т.: 8-987-666-41-40, 89370100141.

**45.АКЦИЯ! БЛОКИ** КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ 20х20х40 – **33** руб., 9х20х40, 12х20х40; **кольца** колодезные всех размеров от производителя, по низким ценам – бурение, монтаж; песок, гравмассу, щебень, торф, навоз, чернозём, КИРПИЧ в ассортименте. Д-ка. Т. 89196543499. Звоните!

**47.Керамблоки** 20х20х40 от производителя. Т.: 48-92-77, 8-903-389-90-38.

**49.Керамблоки, цемент, керамзит** в мешках. Цены от производителя. Т. 89053447932.

**52.Пластиковые ОКНА,** железные **ДВЕРИ.** Замер, доставка – бесплатно. Без выходных. Т.: 89176529694, 89276679588.

**53.Отруби, зерно, к/корм,** сахар, муку. Доставка. Т. 89373916016.

**59.СЕМЕНА кормовой свеклы "ЛАДА"** высокой репродукции. Тел.: 8/8352/ 73-39-11, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

**60.СЕМЕНА** высокоурожайных **томатов, огурцов, перцев** и др. Тел.: /8352/ 73-39-11, 75-80-34, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

**61.БЛОКИ керамзитобетонные** от производителя. Гарантируем высокое **качество.** Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

**66.Заборы** кованые. Т. 89276689587.

**71.ПИЛОМАТЕРИАЛ** любой, **срубы** в наличии и на заказ, **дрова,** горбыль. Т. 8-903-389-14-00.

**74.КамАЗ – сельхозвариант.** Т. 8-937-952-84-67.

*Саламлатпăр*



***Вăрмар районĕнчи Энĕшпуç ялĕнче çуралса ӳснĕ, халĕ Шупашкар хулинче пурăнакан ентешĕмĕре, Вăрмарсен Шупашкарти ентешлĕхĕн вице-президентне, Вăрмар районĕн тата Энĕшпуç ялĕн хисеплĕ çыннине – <u>Василий Николаевич НЯГИНА</u> – юбилей ячĕпе пĕтĕм кăмăлтан ăшшăн саламлатпăр. Салампа пĕрлех пурнăçăн анлă çулĕпе тикĕссĕн утма чăваш юманĕ пек çирĕп сывлăх, пархатарлă кун-çул, çăл куç евĕр тапса тăракан вăй-хал, иксĕлми телей сунатпăр.***

***<u>Хисеплесе – Энĕшпуçĕнчи вăтам шкул ĕçченĕсем.</u>***

Администрация Комсомольского района информирует о предоставлении в аренду земельного участка сроком на 49 лет из земель сельскохозяйственного назначения:

- с кадастровым номером 21:13:100201:183, площадью 2163 кв.м., расположенного по адресу: Чувашская Республика, Комсомольский район, Комсомольское сельское поселение.

Заявки принимаются в течение месяца по адресу: 429140, Чувашская Республика, с.Комсомольское, ул. Заводская, д. 57. Справки по телефону: 8(83539) 51567.

## ПРОДАЮ

**75. Дымоходные трубы** из нерж. стали. **Аргонная сварка:** медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

**76.СРУБЫ** с комплектацией. **Липовые срубы** – на заказ. Доставка. Т. 8-937-952-84-67, Владимир.

**77.ТЕПЛИЦЫ: 3х6** – 12000 р., **3х8** – 15000 р. Доставка. Т. 48-16-54.

**88.<u>Грабли</u>** <u>от 23 тыс. руб.</u>, **<u>плуги, картофелесажалки,</u>** <u>фрезы,</u> **<u>косилки</u>.** Низкие цены. Всё новое! Тел.: 8-927-851-68-58, 8-937-955-98-02.

**89.Срубы** /3х3, 6х3/ – готовые и на заказ. Строим под ключ. Т. 8-909-300-31-21.

**103.Кирпич, керамблок, кольца колодезные.** Высокое качество. Низкие цены. Т. 89623213680.

**107.Пластиковые окна,** деревянные. Немецкое качество. Бесплатные услуги: замер, доставка, демонтаж, монтаж. **Гарантия** 5 лет. Пенсионерам **скидки.** Т.: 8/8352/ 377017, 89373913991.

**108.Пчелосемьи.** Т. 89196535092.

**111.К/корм,** зерно, ракушки, **мясокостную муку** и т. д. Доставка по ЧР бесплатно. Т. 89003343380.

**851.Кирпич, кольца.** Д-ка /вездеход манипулятор/. Т. 444407.

**910.Прицеп мотоблока** – недорого. Доставка. Т. 8-905-344-47-35.

## КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

**70.Дом** с участком в любом состоянии. Т. 8-960-300-87-87.

**80.Землю, дом** в Чебоксарском, Моргаушском р-нах. Т. 489357.

**93.Земельный участок** со свидетельством под ИЖС площадью не менее 40 соток, можно с ветхими постройками в Чебоксарском, Моргаушском районах. Посреднику за информацию, если сделка состоится, 2000 руб. Т. 8-927-668-03-46.

**104.Бычков, коров, тёлок, овец,** свиноматок. Т. 8-927-999-37-37.

**587.Коров, бычков и лошадей.** Т. 89030659909.

## УСЛУГИ

**25.Установка забора** из профлиста, сетки-рабицы, секции ворот /распашные, откатные, автоматика/. Гарантия. Тел. 8-917-651-80-57.

**32.Наркология. Живите трезво!** Анонимно. Консультация бесплатно. С 8 до 13 ч. А.: Чеб., пр. Ленина, 56. **Т. 552733.** Лиц. ЛО 2101000928 МЗ СР РФ от 13.09.13 г. *Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**51.Бурение** колодцев: скважин; **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 8-937-379-00-80.

**96.Православный экстрасенс.** Т. 8-987-660-39-29.

**99.Автоматические ворота, видеонаблюдение.** Т. 89278636398.

**152.Бурение скважин на воду.** Т. 8-960-302-12-93.

**160.Бурение колодцев,** углубление; **продажа и доставка** ж/б колец. Т. 8-905-343-42-07.

**257.Наркология. Т. 8-927-667-33-68.** *Лиц. 5001001230 от 8.06.2007г. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

## СУТАТĂП

**795.**Лайăх кĕрекен **таптарнă çăм.** Т. 89170664146.

# Кунер юрăçисем

*Куславкка районĕнчи Кунер-ти информацине культура центрĕ çумĕнчи хĕрарăмсен «Сударушка» ансамблĕ йĕркеленнĕренпе нумай вăхăт иртмен-ха (2011 çул), анчах та таврара вĕсем çинчен илтмен çын çук та пулĕ. Ял артисчĕсемсĕр рай-онта пĕр мероприяти те иртмест.*

Ушкăнра – тивĕçлĕ канăва тухнă 13 çын. Вĕсем культура çуртне эр-нере икĕ хут репетицие çÿреççĕ. Ан-самбль репертуарĕнче – чăваш тата вырăс халăх юррисем. Пултаруллă хĕрарăмсем хăйсен укçи-тенкипе пилĕк тĕрлĕ хитре тум çĕлеттерчĕç.

Ансамбль ертÿçисем – Лю-бовь тата Борис Федоровсем – вĕсене икĕ сасăна тĕрĕс юрла-ма, сцена çинче килĕшÿллĕ тытма вĕрентеççĕ.

Кÿршĕсем патне те концертсем-пе кайса килеççĕ. 2013 çулхи çу уйăхĕнче «Сударушка» Тутар Ре-спубликинчи Чаллă хулинче хăйĕн пултарулăхне кăтартса Тав çырăв-не тивĕçрĕ.



● *Сцена çинче тухас умĕн.*

Нумаях пулмасть «Сударушка» ансамбль Вăрмар районĕнчи Эн-трияльĕнче пулчĕ, Культура çурта-лăкне халалласа пысăк концерт лартрĕ. Савăнăçлă, чуна пырса ти-векен юрăсем шăраннипе пĕрлех хаваслă сценкăсем те пулчĕç. Халь-хи вăхăтра ушкăн çĕнĕ программа хатĕрлет.

**Елена ПАВЛОВА**

*Презентаци*

# Тутар поэзийĕ чăвашла янăрать

*Чăваш халăх поэчĕ Юрий Сементер тутар поэзийĕн антологине чăвашла куçарнă. Наци библиотекинче чăваш тата тутар литературин представителĕсем, вулакансем «Тутар поэзийĕн кăшăлĕ» кĕнекене хакларĕç. Уява хăнасем – Тутарстан Писательсен союзĕн председателĕ Рафис Курбанов, Тутар Республикинче пурăнакан чăваш поэчĕ Евгений Турхан – хутшăнчĕç. Гузелия Зинетуллина тутар юррисене шăрантарчĕ.*

Кĕнекене тутар поэчĕсен 123 хайлавĕ кĕнĕ. Çав шутра Габдулла Тукай, Муса Джалиль, Хасан Туфан...

«Эпĕ ултă çул салтакра пулнă. Тăватă çул – Германире, иккĕшне Хусанта ирттертĕм. Çавăн чухне тутарсен чылай поэчĕпе паллашрăм. Вĕсен илемлĕ сăввисене чăвашла куçарас кăмăл çуралчĕ, – куçару ĕçне епле кÿлĕнни пирки каласа кăтартрĕ Юрий Сементер. – Тутарсен чăвашла янăракан хайлавсем пуххăсах пычĕç. 1975 çултанпа 123 поэт сăвви-поэмине куçартăм. Вĕсем – ĕç юррисем, юрату, туслăх темисемпе çырнăскерсем. Рафис Курбанов тутар çыравçи сăвăсене пухса кĕнеке туса кăларма сĕнчĕ».

Çак шухăш пĕлтĕр пуш уйăхĕн вĕçĕнче Рафис Курбанов Чăваш Ене килсен çуралнă иккен.

«Чăваш тусăм Пушкăртра пурăнакан тутар поэчĕсен хайлавĕсене те куçарнă. Анчах эпир вĕсене кĕнекене кĕртмерĕмĕр, – ĕç-пуç аталанăвĕпе паллаштарчĕ Рафис Курбанов. – 123 поэтран 63-шĕ хальхи вăхăтра ырă-сывă пурăнаççĕ, ĕçлеççĕ. Чăваш тусăмăра кĕнеке кăларма шантартăм. Икĕ эрне каялла хамăр патра унăн презентацине ирттертĕмĕр. 100-шне Наци библиотекине, 100-шне куçаруçăна парнелетĕп. Тутар Республикинче чăваш ялĕсем пур. Унти шкулсемпе библиотекăсене те çак кĕнекене валеçсе парăпăр».

Р.Курбанов кĕнекен Хусанта иртнĕ хаклавĕнче Ю.Сементере хăйĕн сăввисен кĕнекине парнеленĕ. «Икĕ эрнере хĕрĕх тăваттăшне чăвашла куçарма та ĕлкĕрнĕ вăл. Акă пĕчĕк кĕнеке туса хатĕрленĕ, мана парнелерĕ», – тĕлĕннине пытармасăр каласа кăтартрĕ тутар çыравçи. Унтан ачасем валли çырнă пĕр сăввине тутарла, вырăсла, чăвашла вуларĕ.

Тутарсемпе чăвашсем ĕмĕртен туслă пурăннă. «Икĕ халăх пĕр тымартан туратланса тухса аталаннă, – палăртрĕ ЧР Культура министерствин этноконфесси хутшăнăвĕсен пайĕн пуçлăхĕ Сергей Казаков. – Туслăх кĕперне çирĕплетсе тăракансем шăпах ĕнтĕ пултарулăх çыннисем. Юрий Сементер ыттисемшĕн те тĕслĕх пулса тăрасса шанатăп».

Çак шухăшах Порфирий Афанасьев поэт та çирĕплетрĕ. «Эпĕ, Тутар Республикинчи чăваш ялĕнче çуралса ÿснĕскер, тутарсемпе чăвашсем пĕр çăвартан тенĕ пек пурăннине хам курса ÿсĕннĕ. Малашне икĕ халăх туслăхĕ татах та çирĕпленсе, вăйланса пырĕ», – терĕ вăл.

**Валентина БАГАДЕРОВА**

*Мĕншĕн çапла калатпăр*

# Тĕнчере çылăхсăр çын çук

Пурнан пурнăçра эпир мĕнле кăна йăнăш туса çылăха кĕместпĕр-ши? Пурте пур унта: усаллине çыхăнни те, ухмахлăхĕ те, ăнсăртран туни те. Çапах турă умĕнче тунă йăнăша йы-шăнма васкамастпăр. Калăн, хамăр кăна чаплă, пĕр çылăхсăр, тап-таса, ыттисем вара – вараланса пĕтнĕ те вĕсене ятламалла, тиркемелле...

Иоанн Евангелире ăс парса ка-ланă притча – ытарлă хайлав – пур. Пĕр хĕрарăм хăйĕн аскăнчăк туйăм-не чараймасăр арçынсемпе çылăха кĕнĕ-мĕн. Çакăншăн хĕрарăма аса-плантарма, чулсемпе пере-пере нушалантарма шухăш тытнă. Ăна хĕнеме пуçличчен вĕсем пухăн-нă вырăна Христос килсе çитнĕ те: «Мĕн тума пухăнтăр-ха?» – тесе ыйтнă. Лешсем аскăна тухнăске-ре нушалантарма тĕв тунă пирки пĕлтерĕç, «Моисей пророк çапла тума хушнă», – тенĕ.

Çак хыпара илтсен Христос: «Сиртен вара никам та хăть пĕр хут та пулин турă умĕнче çылăха кĕмен-им, хăвăр чунăрсемпе тап-таса-им? Кам та кам хăй пурнăçĕнче çылăх туман тесе шухăшлать, çак хĕра-рăма чулпа пеме пултарать, унч-чен лайăх шухăшласа пăхăр, атту хăвăрăн та çĕнĕ çылăх тăвасси çавăнтах. Тĕнчере пиртен кашни-ех мĕнле те пулин çылăх тунах», – тенĕ. Пухăннисем Христос сăмахĕ-сем хыççăн пĕр кана шăпăрт тăнă, хăйсен йăнăшне ăнланса аллисен-чи чулĕсене пăрахнă, хăвăрт салан-са пĕтнĕ.

Çылăха кĕнĕ хĕрарăм питĕ-питĕ ÿкĕннине ĕненсе Христос çапла каланă: «Ÿлĕмрен нихçан та кун пек намăс ĕç ан ту, сана хальхăхе каçаратăп». Çак каларăшăн тĕшши çакăн пек: пĕр-пĕр çынна пĕлмесĕр айăпласа ятличчен малтан хăв пир-ки те шухăшласа пăхма ан ман, çын инкекне ăнланса ил те хĕрхенсе каçарма ăс çитер.

**Роман ЧЕПУНОВ**

# Гороскоп

*Нарăс, 17-23*

**Сурăх.** Хăвăр ывăннине туятăр. Эрнелĕхе отпуск илĕр те ăçта та пулин канма тухса кайăр. Килтех юлатăр пулсан карьерăпа çыхăннă ыйтусене татса парас тĕллевпе ĕçлĕ тĕл пулăва хутшăнăр, çĕнĕ ĕçтешсемпе паллашăр. Çемье çавăрманнисен вырсарни кун турă çыннине тĕл пулас шанăç пур.

**Вăкăр.** Этемлĕхĕн черчен çуррине кил-тĕрĕше тирпей-илем кĕртни те /тунти кун/, ашшĕ-амăшĕ патне кайса килни те /ытлари кун/, хĕр-хĕрарăм тусĕсемпе лавккасем тăрăх çÿрени те /эрне кун/ савăнтарĕ. Шăмат кунхи ташă каçĕнче кăмăл туличчен канни сăн-питĕ-ртенех курăнĕ.

**Йĕкĕреш.** Пĕр тĕл пулуран теприне васкани те /тунти кун/, тахçан пуçăннă ĕçе вĕçлесе харăсах темиçе проект тума тытăнни те /юн кун/, командировкăна кайма тивни те /кĕçнерни кун/, асаннĕр патне хăнана çитсе килни те /эрне кун/ ывăнтармĕ. Канмалли кунсенче те алăран ĕç ямастăр, çапах уçăлма тухма, тĕл пулăва çитме май тупатăр.

**Рак.** Пĕртен пĕр çăлăнăç – фитнес. Сире кам та пулин тарăхтарĕ /тунти кун/, иртнине аса илме хистĕ /ытлари кун/. Ахăртнех, шанса та пăсăлатăр. Хăш-пĕр хĕр мăнтăрланма тытăннăшăн пăшăрханĕ. Ку тĕлĕшпе те çăлăнăç пур: ташă каçне кайма ан ÿркенĕр, юн кун пĕр-пĕр секцие çырăнăр, эрне кун та спортзала кайса килме вăхăт тупăр.

**Арăслан.** Тарăхтармаллипех тарăхтарĕç. Тунти кун çавăншăнах никампа та сăмах хушмастăр, кирек мĕнле ыйтăва та типпĕн хуравлатăр. Ытлари кун ятлаçма хăвăр сăлтав шыратăр. Юн кун йăлтах лăпкă, енчен те ку эрнере тĕл пулу ирттерме палăртнă тăк унта шăпах çав кун кайăр.

**Хĕр.** Хĕрсен ĕçлес хавхаланăвĕ çав тери пысăк. Апла пулин те сирĕн ялан кĕтме тивĕ. Ĕçтешсем хăйсен тивĕçĕсене вăхăтра пурнăçламаннине пула ĕç тытăнса тăрĕ /тунти кун/. Шалăва та вăхăтра памĕç /кĕçнерни кун/ кунчен кĕтме тивĕ. Çавăнпах тахçанах туянма ĕмĕтленнĕ япалалла пулаймăр. Шăмат кунхи тĕл пулăва та хутшăнма май килмĕ.

**Тараса.** Мĕн чухлĕ кĕтменлĕх! Ас тăвăр: вĕсем пурте ырă мар. Тунти кун ĕçре пысăк йăнăш тăвас хăрушлăх пур. Ахăртнех, уншăн пуçлăх пуçран шăлмĕ. Эрне кун сусăрланасран сыхланса асăрханулăрах пулни пăсмĕ. Эх, ытлари кун кĕтмен çĕртен сире укçа парĕç. Юн кун тахçанхи юлташăра тĕл пулатăр, вырсарни кун хăвăра кирлĕ информаци пухатăр.

**Скорпион.** Эсир хальлĕхе нимĕн тума та ан палăртăр. Канăр çеç. Ытлари кун юлташăрсемпе чун каниччен пуплеме сире нимĕн те чăрмантармĕ. Кĕçнерни кун лайăх пĕр-пĕр кĕнеке тупса вулăр, каçхине кинотеатра кайса килĕр. Шăмат куна юратнă çыннăрпа пĕрле ирттерĕр.

**Ухăçă.** Иртнĕ уйăхра самаях ĕçленĕ курăнать. Çăлтăрсем сирĕн алла пысăк укçа кĕрессине систереççĕ /тунти кунпа юн кун/. Анчах тăкакланма тивĕ. Тахçантанпах стоматолог патне кайман, халĕ шăпах унта çырăнма вăхăт /ытлари кун/. Тăвансем патне те çитсе килме тивĕ /кĕçнерни кун/. Хăнана парнесĕр епле кайăн-ха?

**Ту качаки.** Мĕншĕн канас мар? Отпуск илме ан васкăр, анчах ĕç хăвăртлăхне кăшт чакарнине нимĕн те пулмĕ. Çĕнĕ ĕçе куçма темĕнле илĕртсен те ан килĕшĕр /ытлари кун/. Хăш-пĕр тивĕçе ĕçтешĕрсемпе пайлăр. Анчах ас тăвăр: ыйăрризене шанса пама кирлĕ мар.

**Шыв тăкан.** Тунти кун парне е ырă хыпар кĕтме пултаратăр, савăнтараççĕх. Юн кун дискотекăна çул тытăр, кĕçнерни кун хаваслă ушкăнпа пĕрле йĕлтĕрпе е çунашкапа ярăнма тухăр. Эрне кун та тунсăхласа ан ларăр, килтех уяв йĕркелĕр, шăмат кун юратнă çынна пĕрле илемлĕ фильм курăр.

**Пулăсем.** Мĕн пур ĕç чарăнса ларнă, кризис тейĕн. Пуласлăх пирки те калама йывăр. Хăвăра алла илĕр те лару-тăрăва тишкерĕр. Юлташсем патне шăнкăравласа иртнине аса илĕр /тунти кун/, пĕр-пĕр курава кайса килĕр /ытлари кун/. Юн кун бассейнра ишĕр, эрне кун кĕске çул çÿреве тухăр.

## Çанталăк



| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 15.02 | + 1 | 0 |
| 16.02 | + 1 | – 1 |
| 17.02 | + 1 | – 1 |
| 18.02 | + 1 | – 1 |
| 19.02 | 0 | – 3 |
| 20.02 | 0 | – 2 |
| 21.02 | – 2 | – 7 |


чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ – ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĔ, "ХЫПАР" ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ

Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ

"Хыпар" индексĕ – 54800, "Чăваш хĕрарăмĕ" – 11515,
"Хыпар"-шăмат кун"– 78353, "Сывлăх" – 11524,
"Çамрăксен хаçачĕ" – 54804, "Кил-çурт, хушма хуçалăх" – 54806

Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ
Номер редакторĕ Г.А.МАКСИМОВ



РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ /директор-тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь-техника центрĕн пуçлăхĕ/



Дежурнăй редактор Н.Г.СМИРНОВА



Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, "ХЫПАР".

ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор-тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ, коммерци директорĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕ-сен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-22-31, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренÿ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-85-87 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-82-91 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ,
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерÿсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ, hypar2008@rambler.ru
корр. пунктĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай
/8-835-38/2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ

Факс: (8352) 28-83-70
Электрон почта: hypar@mail.ru



Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» ПУП типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.



РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРÿСЕНЕ 316-мĕш пÿлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.
Хаçатри рекламăсăр тÿлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшÿллĕн "Аталану çулĕ-пе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă" рубрикăсенче пичетленеççĕ.



Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерÿсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.
Тираж 8843. Заказ 542.



Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.